Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУН 25 ШĂМАТКУН 144 (4957) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Ийунĕн 26-мĕшĕ — РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун

Пуртĕ суйлав урнисем патне пырса совет халăхĕн хăватне тата пĕрлĕхне тата тепĕр хут кăтартар!

Ыран суйлав

Ийунĕн 26-мĕш — РСФСР тата Чăваш республикинчи халăхсен чаплă уйав кунĕ. Çак кун Чăваш халăхĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне тухать.

Ирĕклĕ çĕршывăн савăнăçлă, телейлĕ халăхĕ тăван çĕршывăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, пысăк çĕкленÿпе хăйĕн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене государствăн аслă оргăнне — Верховнăй Совета суйлĕ.

Пирĕн халăх ку суйлавра та, ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухнехи пекех, коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕн хăватлă вăйне кăтартĕ. Совет гражданĕсем суйлава пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă пулса тухаççĕ.

Чăваш халăхĕ хăйĕн сасĕсене Ленин—Сталин партине чĕререн парăннă, социалисăм ĕçне чĕререн йуратса туса пыракан, халăх тăшманĕсемпе хăйаррăн кĕрешекен çынсемшĕн парать. Халăхăн кандидачĕсем — Сталинла блок кандидачĕсем. Вĕсем тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пурнăçне парса ĕçлекен çынсем.

Халăх хăйĕн кандидачĕсене шанать. Çакă вăл — пирĕн суйлавçăсем çĕршыва çĕнтерÿрен çĕнтерÿ патне илсе пыракан большевиксен партине вĕçĕмсĕр йуратнине, йаланах пирĕн партишĕн сасăлама хатĕр пулнине кăтартать.

Коммуниссен партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн çĕршывра социалисăм талкишпех çĕнтерчĕ. Социалисăм халĕ ĕмĕтленнĕ ĕмĕт мар. Вăл пирĕн кулленхи пурнăçра, хамăр Сталинла Конституцире.

Пирĕн республика кайра йулнă çĕршывран малти ретре пыракан, орденлă республика пулса тăчĕ. Чăваш халăхĕн пурнăçĕ пермайах лайăхланса пырать, халăхăн пултарулăхĕ ÿсет, формăпа тĕлĕшĕнчен — нацилле, ăшчикĕ тĕлĕшĕнчен — социалисăмлă культура чечекленет.

Çĕршывăн пуянлăхĕ халăх аллинче. Пирĕн халăх социалисăмлă çĕршыв, пуян çĕршыв хуçи. Çавна вăл вĕçĕмсĕр савăнать. Халăхăн суйлава хатĕрленнĕ май пулса пыракан анлă çĕкленĕвĕсем хавасланăвĕн çăлкуçĕ çакăнта ĕнтĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленни, халăхăн йуратнă çулпуçĕ Аслă Сталин тата унăн çывăх соратникĕсем Молотăв, Калинин, Каганович, Ворошилăв, Андрейĕв, Микойан, Йежов тата Жданăв йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма килĕшÿ пани Чăваш халăхĕн политикăлла çĕкленĕвне ÿстерчĕ, производствăлă пултарулăхне хăпартрĕ.

Халăхăн уйавне — суйлава — пур çĕрте те: хуласенче, йалсенче, хапрăк савăтсенче, колхоз хирĕсенче социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарнипе, çĕнĕ çитĕнÿсемпе, мухтавлă ĕçсемпе тивĕçлĕн кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Суйлав умĕнхи социалисăмлă ăмăрту стахановĕцсене çĕршерĕн çĕнĕрен çуратса ÿстерчĕ.

Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисем, хăйсен производствăлă активлăхне вăйлăн çĕклерĕç. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Назарăв йулташ йертсе пыракан тимĕрç цехĕнче ĕçлекен тимĕрçĕсем — Миронă, Йефремăв, Йасонăв йулташсем хăйсен кулленхи ĕç нормисене 400—500 процент таран тултарса пыраççĕ.

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат — стахановкă Антоновă йулташ ĕç нормине куллен 200—300 процентшер тултарса пырать. Антоновă ĕçлекен йăвăç каскалакан цехра Авдонин, Дубенцов, Йемельйанăвă йулташсем те хăйсен нормисене 200 процент ытла тултараççĕ. Вакунсем йусакан савăтри рабочисем иккĕмĕш квартăл планне ийунĕн 26-мĕшĕнче тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Вăрнарти фосфорит савăтĕнче суйлав умĕнхи ăмăртăва сарса пынă май стахановĕцсен речĕ хытă ÿсрĕ. Çирĕм кун хушшинче 54 стахановĕц хутшăнчĕ. Вĕсенчен Степанăв Матвей, Судăв Николай, Тигушĕв Иван, Шатров стахановĕцсем плана тăтăшах 200—230 процентшер тултарса пыраççĕ. Вăрнарти фосфорит савăчĕ май уйăхĕн планне 124 процент ытла тултарнă.

Шупашкарти тир сăран савăчĕ пайанхи куна çурçуллăх планне ытлашшипех тултарнă. Çавăн пекех çурçуллăх планне Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕ 138 процент, Сĕнтĕрвăрринчи катка-пичке хапрăкĕ 137 процент ытла тултарнă. Çакăн пек паха тĕслĕхсем татах та нумай.

Ĕçри çĕкленÿ, пултарулăх колхозлă йалта та анлăн саралать. Колхозсем çуракине ăнăçлăн ирттерчĕç. Уйхирсем йемйешĕл тырпулсемпе кашлаççĕ. Колхозниксем вăйлă тырпула пĕр тăкаксăр вăхăтра пухса кĕме çинĕ тăрсах хатĕрленеççĕ.

МТС трактăр бригадисем кăçал çĕртме сухине иртнĕ çулхинчен хăвăртрах туса пыраççĕ. Ийунĕн 10-мĕш тĕлне çĕртме тăвас плана республикĕпе 85 процент тултарнă. Кунта уйрăмăнах Йĕпреç, Шăмăршă, Вăрмар, Кĕçен Йелчĕк МТС тракторисчĕсем паттăр ĕçлени курăнать.

Трак районĕнчи „Хĕрле хĕвел-тухăç“ колхоз колхозникĕсем суйлава пысăк тухăçлă тырпулăн кĕрешессине темĕçе хут вăйлатнипе, хăйсен умĕне тăракан обйазательствăсене анăçлăн пурнăçланипе кĕтсе илеççĕ. Вĕсем çак кунсенче 90 гектар клевер, 28 гектар кĕрхи тулă калчисене иккĕмĕш хут çумкуракăнсенчен тасатнă, ытти тырпулсене те çумкуракăнсенчен тасатсах тăраççĕ. Колхозниксем ийунĕн 26-мĕш тĕлне государства умĕнчи пур парăмĕсене парса татас тĕлĕшпе пĕр-пĕрине ăмăртаççĕ.

Шăхасан районĕнчи „Пинер“ колхоз РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне тырпула пухса кĕме хатĕрленессине вăйлатнипе кĕтсе илет. Кунта тырă вырмали, авăн çапмали машинăсене пĕтĕмпех йусанă. Вĕсем пайан тесен пайан ĕçе тухма хатĕр.

Кашни совет çынни, — хапрăк-савăтра-и вăл, колхозра-и вăл — çĕршывĕн ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлесе большевиксен партипе совет властне, Сталинла Тĕпкома, Аслă Сталина вĕçĕмсĕр йуратнине кăтартать. Сталин йулташ йачĕ ĕççынниcене çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарать.

Суйлавра çак çĕкленÿ, хавхаланÿ пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланиччен палăрмала. Суйлавçăсем! Пурте пĕр çын пек пулса суйлава тухăр! Пурте суйлава!

Суйлавра кашни суйлавçă сассийĕ темĕн пек паха, вăл халăхăн никам çĕнтерейми, аркатайми çирĕп пĕрлĕхĕн пайĕ.

Суйлаври хисеплĕ правапа усă курманни пĕр суйлавçă та ан йултăр!

Суйлавçă йулташсем! РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕн хăватлăхне тата тепĕр хут кăтартар, çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвар!

М. И. Калинин йулташ „Електроапарат“ савăтри рабочисем патĕнче

ЛЕНИНГРАД, ийунĕн 22-мĕш. Пайан „Електроапарат“ савăтри рабочисем, инженерлă-техникăлă работниксем, служăщисем тата çавăн пекех Балти флочĕн шыв айĕнче ĕçлекен морйакĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă хăйсен кандидачĕпе — Михаил Иванăвич Калинин йулташпа тĕл пулнă.

Пухура пурĕ виçĕ пин çынна йахăн пулнă.

ПСК(б)П Ленинград хула комитечĕн çекретарĕ А. А. Кузнецов тата Ленинград совечĕн председателĕ А. Н. Петровский йулташсемпе пĕрле Михаил Иванăвич Калинин президиума хăпарать. Залри çынсем хăйсен кандидатне, шанчăклă ленинцăна, совет çĕршывĕн президентне Михаил Иванăвич Калинина пурте пĕр харăс ура çине тăрса, тăвăллăн алă çупса тата „урра“ кăшкăрса саламлаççĕ.

Чи малтанах çиччĕмĕш цехри стахановĕц Терукăв йулташа сăмах параççĕ. Вăл Калинин йулташа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Свердловски суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ панăшăн савăтри рабочисен йачĕпе тав тăвать. Краснофлотĕц-подводник Носков йулташ уçăмлă сăмах тухса калать. Унтан инженер Духăвă, комсомолĕц Моносăв, партком çекретарĕ Матвейĕв т. ыт. те сăмах тухса калаççĕ.

Пуху пĕтес умĕн М. И. Калинин сăмах тухса каланă. Вăл Испанире пулса иртекен ĕçсем çинчен тĕплĕн чăрăнса тăнă. Калинин йулташ сăмахне пуху питĕ пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Пурте пĕрсаслăн йышăннă резолюцире пуху Свердловски суйлав округĕнчи ĕççыннисене Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕшĕн — Михаил Иванăвич Калининшăн сасăлама чĕннĕ.

Митинг хыççăн Калинин йулташ савăтри цехсене курса çÿрене тата рабочисемпе калаçнă.

* * *

Ийунĕн 22-мĕшĕнче ирхине Калинин йулташ Ленинградри Калинин йачĕпе тăракан савăтра пулнă. (ТАСС).

Совет халăхĕн творчествăлă çĕкленĕвĕпе хаваслăхĕ

Совет халăхĕ хальхи вăхăтра халиччен курман политикăлла çĕкленÿпе хаваслă кунсене пурăнса ирттерет. Çак çĕкленÿ çĕнĕ чаплă ĕçсем, производствăлă çĕнĕ çĕнтерÿсем çуратса каларать, ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем Верховнăй Советсен суйлавĕсене çав çĕнтерÿсемпе паллă тăваççĕ те.

Суйлав умĕнхи социалисăмлă ăмăртура Тамбăври вакунсем йусакан савăтри коллектив чаплă çитĕнÿсем тунă, вăл çурçуллăх производствăлă программăна срукчченех тултарнă.

Старый Оскол (Курск облăçĕ) хулинчи предприйатисемпе транспăртра ĕçлекен коллективсем РСФСР Верховнăй Совет суйлавне производствăлă пысăк çĕнтерÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Сĕтел-пукансем тăвакан хапрăкри рабочисем ийунь уйăхĕнчи производствăлă программăна срукченех тултарнă, канатсем тăвакан хапрăк коллективĕ иккĕмĕш квартăлти программăна срукчен тултарнă. Старый Оскол станцинчи машиниссем пăравуссен техникăлă хăвăртлăхне ийунь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче 43,8 километра çитернĕ, задани тăрăх — 38,9 километр.

Мускаври, Ленинградри, Свердловскри, Горькинчи, Хусанти тата ытти хуласенчи нумай предприйатисем пĕтĕм халăх праçникне производствăлă заданисене тултарнипе йе ирттерсе тултарнипе рапăртлаççĕ.

Колхозлă йал та çакăн пек творчествăлă çĕкленÿпе хаваслăхпа пурăнса ирттерет.

Çуракине ăнăçлăн вĕçлесе колхозниксемпе совхозсенчи рабочисем тырпула лайăх пухса кĕртес тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлеççĕ. (ТАСС).

Обйазательствăсене тултарнă

Моссоветăн çăмăл промышлĕнăç управленин çиçтемине кĕрекен предприйатисем РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавĕ йачĕпе пĕрремĕш çурçуллăх планне срукченех тултарма обйазательствă панă. Çав обйазательствăна вĕсем тултарнă.

Ийунь уйăхĕ пĕтнĕ тĕлĕ Моссоветăн çăмăл промышлĕнăç хапрăкĕсем программăран ирттерсе 25 мĕлйун тенкĕлĕх продукци кăлараççĕ.

(ТАСС).

РСФСР ГОСУДАРСТВĂ ГЕРБĔ

Герба çуталса тăракан 3 пин чултан ерешлесе тунă. Ăна Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче — Хĕвеланăç Çĕпĕр павильйонне вырнаçтараççĕ.

(Сойузфото).

Ийунĕн 26-мĕшĕ — РСФСР, Украинă ССР тата Белоруççи ССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун

Украинă тата Белоруççи Советлă Социалисăмлă Республикĕсенчи халăхсем Верховнăй Совечĕсене суйламали куна пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ.

Суйлава хатĕрленнĕ кунсем — Украинăпа Белоруççи халăхĕсем тăван çĕршыва, ĕççыннисем коммуниссен партине, халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа пысăккăн тата чĕререн йуратса тăнине кăтартакан хăватлă демонстрацисемех пулса кайнă.

Украинăпа Белоруççири суйлав умĕнхи кунсем — вĕсем чăннипех те пĕтĕм халăх çĕкленĕвĕн кунĕсем пулса тăраççĕ.

Кийĕври, Харькăври, Одессăри, Мариупольри тата Украинă СС Республикĕнчи ытти хуласенчи предприйатисенче те суйлав умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йанă май, çĕршер те пиншер çĕнĕ стахановĕцсем ÿссе çитĕнне, вĕсем пĕтĕм халăх праçникне производствăлă пысăк çĕнтерÿсемпе кĕтсе илеççĕ. „Серп и молот“ савăтри (Харькăв) паллă стахановĕцсем Йефимăвпа Литвишко тата ыттисем те кулленех пилĕкшер нормă йе унтан та ытларах параççĕ.

„Макеевуголь“ (Сталино) тресчĕн 28-мĕш номерлĕ шахтăри горньаксем çурçуллăх плана срукченех тултарнă, планран ирттерсе татах вунă пин тоннă ытла кăмрăк кăларнă. 200 горньак ытла нормăна кулленех пĕрре çурă йе икĕ нормă тултарса пыраççĕ. „Чистяковантрацит“ тресчĕн Буденный йачĕпе тăракан шахти кăмрăк кăлармали çичĕ уйăхлăх плана ийунĕн 21-мĕшĕнче тултарнă.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче Украинăпа Белоруççи СС Республикĕсенчи суйлавçăсем хăйсен сасĕсене коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн пама суйлав урнисем патне пурте, пĕр çын пек пулса, пырĕç.

(ТАСС).

Чехословаки халăхĕ протеслет

ПРАГА, ийунĕн 22-мĕш. (ТАСС). Шалти ĕçсен министерствин оргăнĕсем Чехословаки компартин тĕп оргăнне — „Руде право“ хаçата хупма хăтлавине пула (ун çинчен çак кунсенче пĕлтернĕччĕ) Чехословакири халăх массисем хуш-шинче вăйлă хумхану тухса кайнă. Енер чылай предприйатисенче, Кладно районĕнчи çĕркăмрăк кăларакан тĕп бассейнăн шахтисенче, Брно хулинчи металлурги тата çар предприйатийĕсенче тата ытти вырăнсенче те çав ĕçе ирĕç протеслесе массăлă пухусем пулса иртнĕ.

Çак пухусенчен пĕрин резолюцийĕнче çапла каланă: „Епĕр „Руде право“ хаçата хÿтленине республикăна хÿтлени тесе шутлатпăр, халăхăн йуратнă хаçачĕ çине тапăнни республикă çине тапăнни пулать“.

„Руде право“ хаçата хÿтлес йухăм кулленех ÿссе пырать. Шалти ĕçсен министерствине протеслесе çырнă нумай резолюцисем параççĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

1938 çулхи тырпула пухса кĕртесси çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи тырпула пухса кĕртесси çинчен постановлени йышăннă.

Постановленире çакна палăртнă: колхозсене организаципе хуçалăх йенчен тĕреклетес тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсем, колхозсемпе совхозсенче социалисăмлă ăмăрту хăватлăн çĕклении, йалхуçалăхне механизацилени ÿсни, çĕрĕç оргăнĕсене, совхозсемпе машинă тракторă станцисене троцкисла-бухаринла сăтăрçăсенчен тасатни тата Ленин—Сталин парти ĕçне парăннă çĕнĕ кадрсене ĕçе лартни — çаксем вĕсем кăçалхи çул çуракине кĕскерех сруксенче ирттерме, чи лайăх вăрлăхсемпе акса хăварма тата уй-хир ĕçĕсене лайăх пахалăхпа тума май парĕç. Çакă ĕнтĕ пысăк тухăçлă тырпул туса илме майсем туса пачĕ, вăл тырпула уй-хиртен ăнăçлăн пухса кĕртме — чи малтанах ирттнĕ çулта хăшпĕр районсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене организацилес çĕрте, хатĕрлевсенче, тырпула турттарнă тата сыхласа усранă çĕрте тунă пысăк йăнăшсене шута илес пулать, çав йăнăшсене пула тăккаланчăксем нумай пулнă.

Йĕтĕнпе кантăрăн пĕр пайĕ ĕçлесе хатĕрлемесĕрех йулнă. Украинăра çĕрмамăкĕн пĕр пайне çур кунне тин уй-хиртен пухса кĕртнĕ.

Саратăв, Воронĕж тата ытти облаçсенче тырпулсене комбайнсемпе пухса кĕртмели плошчĕтсен виçине пĕчĕклетсе йышăнас сийенлĕ практикă пулнă, çав вăхăтрах ахаль машинăсен ытлашши нумай ĕçлеме тивнĕ, çавна пула тырпулсене пухса кĕртсе пĕтермен вăхăтрах комбайнсем ĕççĕр ларнă. Тырпулсене пухса кĕртесси вăраха тăсăлнă, вырса пăрахнă тырпул купасенчех выртнă тата авăн çапасси нумай вырăнсенче çуркуннеччченех пынă, çаксене пула ĕнтĕ тырпул нумай тăкакланнă тата унăн пахалăхĕ чакнă. Ытти районсенче комбайнсем ытлашши ĕçлене вăхăтрах тырпулсене пухса кĕртмели ахаль машинăсемпе усă курман фактсем пулнă, çакă вăл тырпул ытлашши пулса тăкăнса пĕтесси патне илсе пынă.

Хĕвелтухăçри районсенче — Новосибирск облăçĕ, Краснойарск крайĕ — чылай чухне пулса çитмен тырпула комбайнсемпе пухса кĕртнĕ, çапла туни тĕштыр пахалăхне начарлатнă тата тăкаксене нумайлатнă.

Авăн çапасси вăраха тăсăлни çакăнтан та килнĕ: нумайĕш колхозсенче чылай колхозниксене тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçсенчен илсе урăх, васкавлах мар ĕçсем тутарнă, çĕрĕç оргăнĕсем авăн çапассине йертсе пырас ĕçрен пăрăннă.

Çаксем пурте ĕнтĕ чылай районсенче колхозниксене начар пахалăхлă тыра парасси патне илсе пынă, çав вăхăтрах ĕçкунĕсем тăрăх пысăк пахалăхлă тĕштыра валеççе пама пур майсем те пулнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ совет оргăнĕсене тата уйрăмах çĕрĕç оргăнĕсене, МТС-сене, совхозсене тата колхозсене — лайăх тырпул пуласса кĕтнĕ май тата хĕвелтухăçри районсенче тырпулсене ирттерех пухса кĕртме пуçланă май кăçалхи тырпула пухса кĕртнĕ çĕрти уйрăмлăхсене шута илме кирлине асăрхаттарать тата тырпул пухса кĕртнĕ тĕле комбайнсене, тырпул пухса кĕртмĕли ахаль машинăсемпе тĕштыра тасатмали машинăсене уйрăмах тĕплĕн хатĕрлеме, тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилеме, тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнĕ çĕрте самотока тата хăйсене хăйсем лăпланса ларнине пĕтерме хушать.

Пысăк организацилĕх пулни тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене кĕске срукра, вăхăтра, пĕр тăккаланчăксăр туса ирттерни — Сталинла 7—8 мĕлйард пăт тĕштыр туса илессинче тĕп задачă пулса тăраççĕ.

Кăçалхи пысăк тухăçлă тырпула пухса кĕртессине кăтартулăн ирттерес йенĕпе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ татăклă решенисем чылай йышăнать. Пĕрчĕлĕ культурăсене, çĕрмамăкне, сахăр кăшманне, йĕтĕнпе кантăра, клевĕре, льуцернăпа ытти курăксене, табакпа махоркăна, çĕрулмине тата пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕçе организацилес тĕлĕшпе постановленире татăклă та тĕплĕ кăтартусем панă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ — кăçалхи çул тырпулсене пухса кĕртессине тата тырпул тăратассине кăтартулăн ирттерме МТС-сен, колхозсен тата совхозсен пур условисем те пур, — тесе паллă тунă. Йалхуçалăхне машинăсемпе тата техникăпа лайăх хĕçпăшаллантарни, лайăх трактăрсен, комбайнсен тата автомашинăсен хăватлă паркĕпе тĕрĕс усă курни ĕçтухăçлăхне чылай ÿстерме, лайăх тырпула йалтах, тăккаламасăр, пухса кĕртме май пăраççĕ. Çакна тума чи малтанах тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилес пулать, тунă çитĕнÿсемпе хăйсене хăйсем лăпланса ларнипе тата мăнкăмăлланнипе татăклăн кĕрешмеле, революцилĕ сыхăлăха мăкатма памала мар тата тăрăшыв сине кăлармасăр йулнă халăх тăшманĕсен йулашкисене пĕр хĕрхенÿсĕр кăкласа тăпăлтарса пымала.

Пысăк тухăçлă тырпула ăнăçлăн пухса кĕртес задачă — колхоз стройĕн организацилĕхне çĕнĕ, тата çÿлĕрех пусăма çĕклеме, социалисăмлă ăмăртăва малашне те вăйлатса пыма хушать. Совет оргăнĕсен тата чи малтан çĕрĕç оргăнĕсен йалхуçалăхĕнче стахановла йухăма пуçарса пымала.

Кулленхи массăлă организацилĕ ĕç вырăнне уйрăм рекордсемшĕн ытларах тăрăшма хăтланнисене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымала, çав кулленхи массăлă организацилĕ ĕç вăл — малта пыракан комбайнерсен, теребилщиксен опытне, тĕштыр, сахăр кăшманĕ, çĕрмамăк тата ытти культурăсем тăрăх пысăк тухăçшăн кĕрешекен малта пыракан çынсен опытне — колхозниксемпе колхозницăсен, совхозсенчи рабочисемпе работницăсен пĕтĕм массине пама хушать.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе кăтартулăн организацилесси, йалхуçалăх продуктисем тăратас тĕлĕшпе государствă умĕнчи обйазательствăсене йалтах тата срукра пурнăçласа кĕртесси — МТС, колхоз тата совхоз руководителĕсен, йалхуçалăхĕнче малта пыракансен, колхозниксемпе совхозсенчи работниксен пĕтĕм массин чи малтан тăрăшса тумали ĕç пулмала. Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртсе лайăх сыхласа усрани çĕршывра йалхуçалăх продуктисем çителĕклĕ те тулăх пулмала тăваççĕ, колхозсене организаципе хуçалăх йенчен малала та тĕреклетсе пырса вĕсен пуйанлăхне ÿстерĕççĕ, колхозниксен пуйан пурнăçне малашне те чылай ÿстерĕççĕ. (ТАСС).

ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТСЕН СУЙЛАВĔНЧЕ АСЛĂ СОВЕТ ХАЛĂХĔН МОРАЛЬЛĔ-ПОЛИТИКĂЛЛĂ ПĔРЛĔХНЕ КĂТАРТТАР!

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата сталинла блок кандидачĕсене—тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕсене, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан чи лайăх çынсене суйлар!

Дубăвпа Павлăв йулташсем хăйсен суйлавçисем патĕнче

ВАРНАР. (Хамăр корр.) Июнĕн 21—22-мĕшĕсенче РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат И. В. Дубăв, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Н. П. Павлăв йулташсем Авруй, Йĕршипоç, Кушлавăш, Варнар поçолкисенче т. ыт. суйлавçăсемпе тĕл пулнă. Патнă митингсем пулса иртрĕç.

Суйлав умĕнхи митингсем пур çĕрте те пысăк çĕкленÿпе иртеççĕ. Суйлавçăсем хăйсен кандидачĕсене ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Йĕршипоçĕнчи митинга 400 çын, Кушлавăшра 300 çын, Варнар поçолкинче 2000 çын пулнă.

Митингсенче суйлавçăсем сăмах тухса каларĕç. Йĕршипоçĕнчи митингра Филиппăв, Тимофеевăв, Михайлăв, Çидăрăв йулташсем; Кушлавăшри митингра Макарăв, Надежднăв йулташсем; Варнар поçолкинчи митингра Крышков, Федăрăв, Çергейĕв йулташсем хĕрÿ сăмахсем тухса каларĕç.

Тухса каланă йулташсем йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ тата унăн çывăх соратникĕсем Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Жданăв, Андрейĕв, Йежов, Микойан йулташсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшÿ панипе пысăк кăмăлпа ырласа саламларĕç. Вĕсем суйлавçăсене Дубăвпа Павлăв йулташсемшĕн сасăлама чĕнчĕç. Дубăвпа Павлăв йулташсем кашни митинграх сăмах тухса каларĕç.

Павлăв йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем! Варнар районĕнчи суйлавçăсем мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратса, ман çине пысăк шанăç хунăшăн сире чĕререн тав тăватăп. Есĕр мана шанни —вăл мана анчах мар, вăл Ленин—Сталин партийне шанни пулса тăрат, тесе шутлатăп епĕ. Мĕншĕн тесен епĕ Ленин—Сталин партин членĕ пулса тăратăп.

Пирĕн çĕршыв коммунисла партин йертсе пынипе, вăйсăр промышленнăçлă, вак йалхуçалăхлă çĕршывран, шутсăр промышленнăçлă, машинăлă йалхуçалăхлă çĕршыва пулса тăчĕ. Рабочисем, колхозник- [illegible] пурăнма тытăнчĕç. Мĕншĕн тесен, пирĕн социалисăмлă государствăра влаçа рабочисемпе хресченсем тытса тăраççĕ. Вĕсене коммунистсен партийĕ, унăн çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пырат. Çаванпа епĕр чи малтанхи сасăна пирĕн йулташшăн паратпăр.

Епĕр капиталисăмлă йĕри-таврара пурăнатпăр, çавна манма йурамаст пирĕн. Фашисла государствăсем пысăк вăрçăна хатĕрленеççĕ, вĕсем чи малтан пирĕн çĕршыв çине тапанма пăхаççĕ. Тискер те выçăхнă фашистсем Испанипе Китайра вăрçа пуçласа йачĕç. Анчах Испанипе Китай халăхĕ фашистсене çĕнтересси пирĕн пала. Мĕншĕн тесен, Испанипе Китайри ĕçхалăхĕшĕн пĕтĕм тĕнчери рабочисемпе хресченсем тăраççĕ.

Есĕр мана шанăпа тÿрĕ ĕçпе ответлеме, рабочисемпе хресчен- [illegible] пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме сăмах паратăп. Социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлас ĕçре епĕ чи малти ретре пулăп.

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин!

Çидăрăв колхозник сăмахĕнчен

— Йулташсем! Июнĕн 26-мĕшĕнче пĕтĕм халăхсен аслă уйавĕ пулат. Вăл кун епĕр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлатпăр. 53 çула çитрĕм ĕнтĕ епĕ. Манăн халĕхипе ĕлĕкхи пурнăçа танлаштарса пăхас килет. Ĕлекхи вăхăтра кам хайартарах, кам куштанрах, кам пуйантарах, кам ытларах ĕрех ĕçтерĕ — çавсене старастана суйлана.

Халăхи суйлавсене ĕлекхипе танлаштарма та çук. Халĕ хамăр ретрен тухнă, Ленин—Сталин партийĕшĕн тăрăшса ĕçлекен çынсене пăхса суйлатпăр. Вĕсем пире пуйан та культурăллă пурнăç туса парассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă, пăхăр Йĕршипоçĕнчи хресченсен ĕлĕкхи пурнăçне. Пирĕн тумланма тумтир тавраш пулман, çиме çăкăр çитмен. Халĕ кашнин аташ пушмак, калуш. Вăт мĕншĕн епĕр коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн —Павлăвпа Дубăвшăн хĕпĕртесех сасăлатпăр.

Сывă пулччăр Ленин—Сталин партийĕ пăхса ÿстерĕ кандидатсем!

Макарăв бригадир сăмахĕнчен

— Йулташсем! Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама епĕр пурте пĕр сасăпах Н. П. Павлăв йулташа кандидата тăратрăмăр. Ку кандидат çинчен епĕр пĕр уйăх ĕнтĕ сÿтсе-йавататпăр. Павлăв вăл хамăр патах килчĕ. Павлăв йулташ партишĕн, ĕçсыннисемшĕн тăрăшса ĕçлекен çын. Июнĕн 26-мĕшĕнче хамăр сасăсене Павлăвпа Дубăв йулташсемшĕн паратпăр.

Совет влаçĕ вăл—пирĕн влаç. Совет влаçĕшĕн епĕ хĕрлĕ партизан пулса тăшмансемпе кĕрешнĕ. Тÿрех калатăп, манăн кĕрешни сая кайман. Ĕлĕкхи вăхăтра 7—8 ачалă çыннăн пурнăç пулман, вăл асапланса çеç пурăннă. Халĕ нумай ачалă çын хисепре. Акă, манăн 8 ача, вĕсем çавăнса пурăнаççĕ. Государства манăн ачасен амăшне 4 пин тенкĕ укçа тÿлесе тăрат.

— Летчик, инженер, тракторис пулатпăр, — теççĕ ачасем. Çавăнпа епĕр малтанхи сасăна Сталиншăн паратпăр.

Сывă пултăр Сталин йулташ!

Ватă суйлавçăсен районти пухăвĕ

КАНАШ, июнĕн 23-мĕшĕ (хамăр корр.). Пайан хулари социалисăмлă культура çуртĕнче Канаш районĕнчи ватă суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху пĕр ыйту—районра суйлава хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе йаврĕ. 70—80 çула çитнĕ мучисем пĕрин хыççăн тепри трибуна çине тухса, хăйсен ĕлĕкхи йавăр кунçулĕсем çинчен, халĕ совет саманинче хăйсене çĕнĕрен çуралнă çынсем пек туйни çинчен каласа параççĕ.

— Революци пулман пулсан, епĕр пайан кунччен те тăраниччен çăкăр çисе курас çукчĕ. Епĕр тепсакайĕнче пурăннă пек пурăннă. Пирĕншĕн совет саманинче тин хĕвел тухрĕ. Çутçанталăк та, çĕрсем те халĕ улшăнчĕç, çĕнелчĕç, пире тĕлĕнмеле пуйан пурлăхсем пара пуçларĕç, —терĕ пухура Турин Çулпуç колхозĕнчен килнĕ ватă стахановец Макарăв йулташ.

Тухса каланă йулташсем пурте халăха телейлĕ пурнăç туса паракан аслă Сталина саламлаççĕ, пĕтĕм чĕререн тав тăваççĕ.

Пухура ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Сиккасси суйлав округĕ тăрăх кандидата тăратнă П. А. Белоруссăв тата Каракла суйлав округĕ тăрăх тăратнă К. К. Ваструк йулташсем пулчĕç. Вĕсем ватă суйлавçăсене хăйсен кунçулĕсем çинчен каласа парса, июнĕн 26-мĕшĕнче пурне те пĕр кăмăллăн суйлава тухма чĕнчĕç.

Ватă суйлавçăсем пĕтĕм Канаш районĕнчи ĕççыннисене суйлав кунĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнсе резолюци йышăнчĕç.

Канаш районĕнчи ватă суйлавçăсен районри пухăвĕ чĕнсе калани

Епĕр, Канаш районĕнчи ватă суйлавçăсем, хамăрăн районта суйлава хатĕрленесси мĕнле пынине пăхса тухма пухăнтăмăр.

Ĕлĕкхи вăхăтра епĕр тĕттĕм, хута пĕлмен халăх пулнă. Пирĕн йуна улпутсем, хапрăк-савăт хуçисем, купцасем ĕçсе пурăннă.

Аслă социалисăмлă революци пире пусмăрпа асап сăнчăрĕнчен хăтарчĕ. В. И. Ленин çул кăтартса хăварнипе тата унăн ĕçне малала илсе пыраканĕ Сталин йулташ çирĕппĕн йертсе пынипе епĕр социалисăмла государства туса хутăмăр.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнче епĕр коммунистсемпе партире тăманнисен сталина блок кандидачĕсемшĕн тулли кăмăлпа сасăларăмăр.

Халăхсен аслă çулпуçĕ, пирĕн учитĕл Сталин йулташ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Канаш савăт суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăни пирĕн Канаш районĕнчи ĕççыннисемшĕн пысăк чыс, пысăк хисеп.

Июнĕн 26-мĕшĕнче епĕр РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатшăн, вакунсем йусакан савăтри паллă стахановкă Й. А. Антонăвăшăн пурте хамăр сасăмăрсене паратпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш савăт суйлав округĕ тăрăх халăхсен аслă çулпуçĕшĕн, йуратнă Иосиф Виссарионăвич Сталин йулташшăн, Канаш хула суйлав округĕ тăрăх—Константин Тимофейĕвич Назарăв, Каракла суйлав округĕ тăрăх—Кирилл Куçмич Ваструк, Сиккасси суйлав округĕ тăрăх—Павел Ананйĕвич Белоруссăв, Катăк суйлав округĕ тăрăх Константин Иванович Иванов йулташсен кандидатуришĕн пĕр кăмăллăн сасăлама мĕн пур Канаш районĕнчи ĕççыннисене чĕнетпĕр.

Сывă пулччăр коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсем!

Сывă пултăр пире çутă та телейлĕ пурнăç Конституцине туса паракан, Чăваш халăхĕн пĕрремĕш кандидачĕ аслă Сталин!

Сывă пултăр коммунистсен партийĕ!

Сывă пултăр аслă совет халăхĕ!

„Иосиф Сталин" пăрçĕмрен

Вăл тĕнчери чи вăйлă пăрçĕмрен, Арктикăри совет флочĕн пуçкарапĕ, тинĕсе сăнавлă ишеве тухнă, часах Арктикăна кайат.

(Союзфото).

Суйлавçăсене йышăнма хатĕр

Пирĕн участкăри суйлавçăсем суйлав кунне пысăк хаваслăхпа, савăнăçлăн кĕтсе илеççĕ. Участкăри агитатăрсемпе доверĕннăйсем суйлавçăсене суйлав Положенисемпе, Сталинла Конституципе тата РСФСР-па ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама регистрацилене кандидатсен пурнăçĕпе, вĕсен ĕçĕсемпе лайăх паллаштарчĕç. Июнĕн 26-мĕшĕнче пирĕн участкăри—пирĕн округри—суйлавçăсем Сталинăн çывăх соратникĕшĕн, Совет правитĕлстви пуçлăхĕшĕн—Вйачеслав Михайлăвич Молăтăвшăн тата Шупашкар хули Совечĕн председатĕлĕшĕн—Перасковйа Иванăвнă Калинкинă йулташсемшĕн сасăлаççĕ.

Епĕр суйлавçăсене кĕтсе илме тивĕçлипе хатĕрлентĕмĕр. Суйлав участки çуртне тул йенчен те, шал йенчен те праçникле илемлетсе лартрăмăр. Ку ĕçре учитĕлсем, агитатăрсем тата уйрăмăнах килхуçи хĕрарăмсем лайăх ĕçлерĕç. Вăрттăн сасăлама 12 пÿлĕм тунă, кашни пулĕмрех чечексем ларăççĕ. Суйлавçăсем участкăна килсен канма йатарласах икĕ пÿлĕм уйăрнă. Вĕсенче пукансем, дивансем, сĕтелсем çинче шурă скатĕртсем пур. Кунта суйлавçăсем лайăх канма: шашкăла, шахмăтла, биллиардла выляма, патефонсемпе музыкă итлеме, хаçат-журнал вулама пултараççĕ. Икĕ пÿлĕмне те лайăх илемлетсе лартнă. Пĕчĕк ачасене вальльи пÿлĕм пур. Буфет пулат. Коридорсене тата пÿлĕмсене ковйорсем сарнă.

Пирĕн участкăра пĕр пин çурă йахăн суйлавçă шутланат. Вĕсем июнĕн 26-мĕшĕнче суйлав участкине килсе коммунистсемпе партире тăманнисен Слалинла блакĕн кандидачĕсемшĕн В. М. Молăтăвпа П. И Калинкинă йулташсемшĕн сасăлама хатĕр тăраççĕ.

Суйлавçă йулташсем, епĕр сире кĕтсе илме хатĕр! Июнĕн 26-мĕшĕнче пурне те суйлав участкине килме чĕнетпĕр!

Шупашкар хулинчи 14-мĕш номĕрлĕ участкăри суйлав комиççи председатĕлĕ

ÇЕЛИВАНĂВĂ.

Хĕрÿллĕ ĕçре

КАНАШ. (Хамăр корр.). Йаманкассинчи суйлав учаскинче пурĕ 20 çын агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен чи асли—53 çулхи Роман Петров йулташ калана тăрăх, Йаманкасси йалĕнче Сталинла Конституцийе тата суйлав саккунĕсене пĕлмен çын çук.

Кунти агитатăрсем суйлавçăсем патне килĕрен çÿреççĕ тата колхоз бригадисенче ĕçлеме 8 учитĕле уйăрнă. Агитатăрсене ĕçре пулăшса пыма вĕсемпе вунă хут семинар иртерне. Суйлавçăсем хушшинче агитаци ĕçне вăйлăн туса пыни çакăнтан та лайăх курăнат: хĕрарăмсемпе, стариксемпе тата çамрăксемпе уйрăмăн икшер хут пуху иртерне.

Йаманкасси йалсовечĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне пур йенчен те хатĕр. Суйлавçăсен спискисене лайăх йĕркелесе çитерне. Сасăламали çурта илемлетне. Вăрттăн сасăлама тунă кабинăсене шалтан шпалер çыпăçтарнă, сĕтелсем çине чăлт шурă çиттисем сарнă. Суйлав кунĕ ача йаслисем тата буфет пулат.

Йалти пултарулăх кружокĕсем спектакль лартма, йурăсем йурлама хатĕрленеççĕ.

Осоавиахим членĕсем суйлав çуртĕнче улшăнса талăкĕпех хурал тăраççĕ. Тата кашни урамра, йал хуралçисемсĕр пуçне, икшер çын дозор тăратнă.

Йаманак колхозĕ суйлава пур ĕçре те çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илет. Çуртырисене виç-тăват хутта çумласа тухнă. Уйри тырпулсе- [illegible] 226 кубла метр чул кăларса хатĕрленĕ, вăрман хатĕрлев планне тултарнă, çапах колхозри çамрăксем 36 лавлă хĕрлĕ обоз туса вăрмана ĕçлеме кайрĕç. Йалсовечĕ иккĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмали плана 177 процент тултарнă. Вăл хăйĕн аллинче икĕ хĕрлĕ йалав тытса тăрат.

Июнĕн 22-мĕшĕнче Йаманкассинче акатуй-массовкă пулса иртрĕ. Массовкăна таврари йалсенчен те çынсем нумай пынă. Агитатăрсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатшăн Антонăвă йулташшăн тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатшăн Белоруссăв йулташшăн сасăлама хĕрÿллĕ агитаци турĕç.

Арк. Ĕçхĕл.

Социалисăмлă обйазатĕлствăна тултарнă

Шупашкар хули совечĕн финанс пайĕнче ĕçлекенсемпе финанс секци членĕсем суйлав умĕн илнĕ социалисăмлă обйазатĕлствăна ăнăçлăн пурнăçларĕç. Июнĕн 21-мĕшне илсен 5693,5 пин тенкĕ укçа пухса иккĕмĕш квартăл финанс плана 104 процент тултарнă. Вăл шутран государствă дохочĕ йенĕпе 103,7 процент, страховани йенĕпе 125 проц., вкладсем йенĕпе 119,7 проц., займсем йенĕпе 173 проц. тата обйазатĕльнă йĕркепе тÿлемели налогсем йенĕпе 80 процент.

Çапла ĕнтĕ, Шупашкар хули совечĕн финанс пайĕ республикăри районсенчипе хуласенчи финанс пайĕсене, финанс секцийĕсене социалисăмлă ăмăртăва чĕнсе хăй çине илнĕ обйазатĕлствăна лайăх пурнăçларĕ.

Пур тÿлевсем йенĕпе те плана тултарассишĕн, пухмали йулнине пĕтĕмпех пухса пĕтерессишĕн кĕрешÿ пырат.

Шупашкар хули совечĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ И. Золотников.

Сывă пулччăр пирĕн кандидатсем!

Июнĕн 20-мĕшĕ. Илйинкă патĕнчи чи çÿлĕ выран—Хĕрлĕ çыр. Айалта анлă Атăл. Кăнтăр йенче—симĕс ту пек симĕс вăрман. Кунта пайан ытла та пысăк илем, кунта чаплă праçник, суйлав умĕнхи массăлă митинг. Унта: ватти-çамрăкки, арçынĕ-хĕрарăмĕ, — пĕтĕмпе 3000 çынна йахăн.

Унта та кунта хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ. Йан-йанах кайаççĕ йурă сассисем.

Кашни çынра хаваслăх, кашни ырă кăмăлпа çиçет. Вĕсем пухăнна ырă шухăшпа, вĕсем хăйсен кандидачĕпе—Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама баллотировкăна тăма килĕшÿ панă кандидатпа Зойă Ананйĕвнă Андрейĕвă йулташпа курнăçма, ăна вĕри чĕресенчен хĕрÿлĕн саламлама пухăннă.

... Кун пеккине Хĕрлĕ çыр нихăçан та курман, нихăçан та илтмен вăл кун пек вĕри те хавас сăмахсене. Пирĕн чăваш халăхĕ те кун пек ирĕклĕ сăмахсене совет саманинче кăна илтме пултарчĕ. Ĕлĕк ун прави пулман, ĕлĕк вăл лайăххăн сывласа курман, лайăх çисе курман, канса курман, савăнман. Килте те, уйра та пĕр тĕс, пĕр сас:

— Мĕнле пурăнса, мĕне куна иртерес?

Çĕршывра ахлату хыççăн илтĕнне ахлату. Унăн вĕçĕ-хĕрри ниçта та, нихăçан кĕтесре те пулман.

— Ĕлĕк чухне пирĕн ĕнсесем çинче пуйансем пирĕн йулашки йунсене ĕçсе ларнă,—тет Даркин йулташ „Хлебороб" колхоз йачĕпе,—унчухне халăх шутра пулман. Халь пур ĕç те халăх ирĕкĕпе пулса пырат. Пирĕн пулас депутатсем, епĕр тăратнă кандидатсем хамăр патах килеççĕ. Вĕсене епĕр питне питĕн куратпăр. Çакăн пек йĕркесем Совет Сойузĕнче çеç пулма пултараççĕ. Пирĕн кандидатсем—Зойă Андрейĕвă тата Перасковйă Калинкинă халăх хушшинчен тухнă йулташсем. Вĕсемшĕн епĕр пурте, пĕр çын пек, сасăлатпăр. Сывă пултăр коммунистсен партийĕ!

Ирĕклĕ сасăсем таçтах кайаççĕ. Савăнса вĕçеççĕ ырашпа та тулăпа витĕннĕ уйсем тăрăх.

— Кирăв йачĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен сире салам,—пуçлат хăйĕн сăмахне Кабуркин С. Ф. йулташ. Вăл хăйсен колхозĕ 9 çул хушшинче мĕнле пысăк çитĕнÿсем туни çинчен калат. Çак колхозри колхозниксем 1937 çулта кашни ĕçкунĕ пуçне 8,6 килограм илнĕ, кăçал 10 килограм илессишĕн кĕрешеççĕ.

— Пирĕн колхозниксем паламала мар улшăнчĕç,—тет малала Кабуркин йулташ,—ĕлĕк ним те пулман, халĕ пурте пур. Ĕлĕк пирĕн тырă çитмен, халĕ сутмалăх та пур. Совет влаçĕ пире пуйан пурнăç пачĕ. Пирĕн задачă—хамăр влаçа татах та çирĕплетесси, унта лайăх çынсене, чăваш халăхĕн тÿрĕ ывăл-хĕрĕсене суйласси. Епĕ пурне те чĕнетĕп,—Калинкинă йулташа РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлар, Андрейĕвă йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлар. Сывă пулччăр пирĕн кандидатсем!

— Сывă пултăр пирĕн аттемĕр Сталин!—вĕçлеççĕ сасăсем колхоз оратăрĕн сăмахне.

— Сывă пултăр телейлĕ çамрăклăх!—пĕр харăс кăшкăраççĕ пионерсем, пирĕн пулас паттăр ăрăвăн представитĕлĕсем.

Вăрман хÿтлĕхĕнчи сасăсем тăплансан, симĕс туратсем илемлетнĕ трибунă умне Гвоздйов йулташ тухат. Вăл Илйинкăра канакан йулташсенчен салам калат, Калинкинă тата Андрейĕвă йулташсемшĕн пĕр харăс тухса сасăлама чĕнет.

— Совет Сойузĕнчи граждансем пур çĕрте те, пур кĕтесре те сасăлама пултараççĕ. Каннă çĕрте те вĕсем суйлава хутшăнмасăр йулмаççĕ. Çакăн пек правана пире революци пачĕ. Революци пире, ытти правасемпе пĕрлех, кану правине те пачĕ.

Сывă пулччăр коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсем!

Канакансенчен тата Мухтанăвă, Никитинă, Данилăв, Петрова йулташсем тухса каларĕç.

— Нумай чăваш çамрăкĕсем Совет Сойузĕн паллă хулисенче, Ленинградпа Мускавра вĕренеççĕ,—терĕ Ленинградри консерваторинчи вĕренекен Петрова йулташ.—Вĕсем хушшинче талантлă çамрăксем пур. Вĕсене Совет влаçĕ вĕрентет, пулăшат. Пирĕн йурăсем паха, вĕсем хĕвеллĕ йурăсем. Чăваш йуррисем пысăк сценăсем çинчен те илтĕнеççĕ. Вĕсем, ытти халăхсен йуррисем пекех, илемлĕ те пуйан. Çавăн пек йурăсене халхи пурнăç пачĕ. Ун пек йурăсемлĕ халăх—культурăсăр халăх мар. Пирĕн культура нихăçанхинчен вăйлă ÿсет.

Илемлĕ лутра çăкасем айĕн каллех хĕрÿллĕ сасăсем, хĕрÿллĕ лозунгсем илтĕнеççĕ. Лозунгсенче пирĕн чаплă, ĕмĕр манми кандидатсене асăнаççĕ.

— Сывă пултăр мĕн пур халăхсен пĕрремĕш кандидачĕ Сталин йулташ!

— Сывă пулччăр Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама килĕшÿ панă кандидатсем, аслă Сталинăн соратникĕсем—

Молăтăв,
Калинин,
Ворошилăв,
Каганович,
Йежов,
Андрейĕв,
Жданăв,
Микойан!

... Массăлă митингăн трибунĕ умне тахçантанпах ăшă кăмăлпа кĕтнĕ кандидат Зойă Ананйĕвнă Андрăйĕвă тухат. Акă вăл—чăваш халăхĕн паллă та тÿрĕ кăмăллă хĕрĕсенчен пĕри, Чăваш Ĕçтăвком председатĕлĕ, акă вăл—епĕр декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Советне суйланă депутат, Чăваш АССР Верховнăй Светне суйлама Мăн-Сĕнтĕр суйлав округĕ тăрăх регистрацилене кандидат Андрейĕвă йулташ.

Митинг ăна хĕрÿллĕн алă çупса, йышăнат, хăйĕн кандидатне мухтаса лозунгсем калат.

— Сире пурне те хĕрÿллĕ салам,—пуçлат Андрейĕвă йулташ хăйĕн сăмахне.—Есĕр мана хавасланса кĕтсе илнĕшĕн чĕререн тав тăватăп.

ССРС Верховнăй Советне суйланă чухне, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, чăваш халăхĕ пĕтĕм совет халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартрĕ.

Çитес суйлавсене пирĕн татах та пысăк хаваслăхпа иртерĕпĕр. Пирĕн депутатсем пулмаллисен çулпуçĕ Сталин йулташ тата унăн соратникĕсем килĕшÿ пани чăваш ĕççыннисемшĕн калама çук пысăк чыс пулса тăрат. Епĕр вĕсене калама çук пысăк хаваслăхпа суйлăпăр.

Хальхи суйлавсене пĕтĕм халăх хутшăнат. Ĕлĕк апла пулман. Земский управăсен суйлавĕсенче 7 çын кăна сасăлама пултарнă.

Халĕ пирĕн влаçра халăх хушшинчен тухнă йулташсем ĕçлеççĕ.

Çак пурнăçа пире революци çеç пама пултарчĕ, ун патне коммунистсен партийĕ, унăн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ илсе çитерчĕ.

Сывă пултăр коммунистсен партийĕ Сывă пултăр коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ!

Фатăр сăмахĕсем хыççăн митингри халăх каллех çĕкленсе тăвăлăн алă çупрĕ. Савăнса кăшкăрса хĕрÿллĕ лозунгсем каларĕ.

— Хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене парар!

— Сывă пултăр пирĕн ирĕк!

— Сывă пултăр Сталинла Конституци!

... Оркестр „Интернационал" йурласан, массăлă митинг хупăнчĕ. Хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшсе илчĕç. Колхозниксем, канакансем, учитĕлсем килĕсене ушкăнăн-ушкăнăн саланчĕç. Çамрăксем хуткупăссемпе, балалайкăсемпе, гитарăсемпе симĕс çерем тăрăх утрĕç. Пионерсем барабанĕсене панлаттарса хăйсен илемлĕ лагĕрне кайрĕç.

Пур çĕрте те хаваслăх. Хаваслă çынсем. Хаваслă сасăсем.

— Айăр, айăр йулташсем, Сталин йулташ кăтартнă çулпа тата пуйанрах, тата илемлĕрех, тата çутăрах кунсем патнелле!

Хударсем.

Çамрăк хĕрарăмсен республикари II-мĕш сиесĕ СТАЛИН йултăш патне йанă çырурăн

Пирĕн йуратнă, тăван Сталин йултăш!

Епĕр, Чăваш республикĕнчи çамрăк хĕрарăмсем республикăри икĕмĕш сиесĕнче пулнă хĕрарăмсем, Сире, пирĕн хаклă, тăван аттене, пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн гениллĕ çулпуçне тата учительне, хĕрӳлĕ салам яратпăр.

Çакă сырупа епĕр Сире есĕр пирĕншĕн атте пек тăрăшнăшăн, пире пуйăн та культурлă тата телейлĕ пурнăç туса панăшăн хĕрӳлĕн тата пысăккăн тав тăватпăр.

Сахăр кăшман уйĕсенче ĕçлекен колхозница-ударницăсене йышăннă чухне Есĕр, Сталин йултăш, çапла каларăр:

„Чăнахах, шухăшласассăн, ĕлĕк авалхи вăхăтра мĕн пулса тăнă-ха хĕрарăмсем. Хĕрарăм хĕр пулса çӳренĕ чухне, мĕн калас, ĕççынисенчен йулашки шутланса тăнă. Вăл ашшĕшĕн ĕçленĕ, çапах ашшĕ ăна: „епĕ сана тăрантаратăп", тесе ӳпкелешнĕ. Йалта хĕрарăм ĕççынисенчен йулашки çын пулнă."

Епĕр çамрăксем, пирĕнтен нумайĕшĕ Октябрĕн тантăшĕсем, капиталисăмлă чуралăхăн, патша пусмăрĕн, жандармсен иртĕхлĕхĕпе машкалĕн пĕтĕм тискерлĕхĕсене тӳсмен. Анчах хамăр аннесемпе аслă аппасен ĕлĕкхи йăвăр пурнăçне пĕлетпĕр.

Октябрĕнти социалисăмлă аслă революци хĕрарăмсен ĕмĕрхи чуралăхне, правасăрлăхне пĕтерсе хучĕ, вăл пире ирĕклĕ, тулли правалă тата телейлĕ турĕ. Пирĕн çĕршыв ӳсет, тĕрекленет, епĕр те ӳсетпĕр. Ленин—Сталин партийĕ, пирĕн правительстви тата Есĕр, Сталин йултăш, пире, хĕрсемпе çамрăк хĕрарăмсене, питĕ нумай патăр. Пирĕн чăваш çĕршывĕ ĕлĕк пĕтĕмпех хута пĕлмен, культурăсăр та чухăн, тĕттĕм те мĕскĕн çĕршыв пулнă, унăн халăхĕсен выçă пурăнма, вилсе пыма тивнĕ.

Ку пĕтĕмпех 20 çул ĕлĕкрех пулнă. Октябрĕнти социалисăмлă революцинче çеç чăваш халăхĕ, аслă вырăс халăхĕ пулăшса пынипе, коммунистсен большевиксен партийĕ, Владимир Ильич Ленин тата Есĕр, Сталин йултăш, йертсе пынипе, телей çулĕ çине тухрĕ. Есĕр, Сталин йултăш, Ленинпа пĕрле ĕçлесе, нацилĕ пусмăра, правасăрлăха пĕтерсе хутăр, расçапа расса, халăхпа халăх пĕр-пĕрне курайманăх пурăннине тата нацилĕ хирĕçӳсене пуçĕнех тĕппипе пĕтерсе парăр. ССР Союзĕнчи пĕтĕм халăхсен пĕртăнлăхне, тăванлăхне тата туслăхне çирĕплетрĕр. ПСК(б)П йертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ пулăшса тăнипе, советлă Чăваш республикĕ пуйан та культурлă, малта пыракан, Ленин ордĕнлĕ çĕршыв пулса тăчĕ.

Советлă Чăваш республикĕнче йаçлĕсен, ача сачĕсен, ача площадкисен, шкулсен, техникумсен, рабфаксен, аслă шкулсен, курссен, библиотекăсен, клубсен, сатсен, стадионсен, кану çурчĕсен шучĕ питĕ пысăк, пирĕн хамăрăн санаторисем пур. Чăваш хĕрĕсем хушшинче инженерсем, техниксем, агрономсем, врачсем, педагогсем, искусства работникĕсем, лётчиксем, бухгалтĕрсем, трактăрискăсем, комбайнеркăсем, шоферсем, колхозсемпе йалсовечĕсен руководителĕсем, хапрăк-савăт командирĕсем пур. Пирĕн колхоз уйĕсем нумай çимĕç параççĕ. Епĕр телейлĕ те савăнăçлă, пуйан та капăр пурăнатпăр.

Çаксенче пĕтĕмпех, Сталин йултăш, епĕр Есĕр пиршĕн, çамрăк хĕрарăмсемшĕн, çамрăк ача амăшĕсемшĕн, пирĕн ачасемшĕн тăрăшнине куратпăр.

Акă мĕншĕн пире Ленин—Сталин партийĕ тата Есĕр, Сталин йултăш, туса панă халăхи илемлĕ пурнăçа епĕр нимрен те ытла хаклатпăр, йурататпăр.

Пĕтĕм совет çамрăкĕсем тăрăн патриотисăмпа тата тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн пĕтĕм вăйа парас, ăна тата вăйлăрах та хăватларах—никам пырса çулăхайми, халăхăн усал тăшманĕсен ĕмĕтсĕр, ĕçĕсене çапса салатакан çирĕп крепăç тăвас ĕмĕтпе тулнă.

Ленин—Сталинăн аслă партине тата Сире, Сталин йултăш, калама çук йуратнипе пыратпăр епĕр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунне.

Есĕр тата Сирĕн шанчăклă соратниксем—Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Жданăв, Андрейĕв, Йежов йултăшсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшӳ пани пире коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн кĕрешме хавхалантарат.

Суйлав кунĕнче Чăваш республикĕнчи пĕтĕм çамрăк хĕрарăмсем, суйлав йешчĕкĕсем патне пырса, хăйсен сассисене пурте пĕр шухăшлăн коммунистсемпе партире тăманнисен никам çĕнми Сталинла блок кандидачĕсемшĕн парĕç. Коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, епĕр Сирĕншĕн, Сталин йултăш, телейлĕ те ирĕклĕ савăнăçла, пуйан пурнăçшăн, совет çĕршывĕн татах та чаплă пуласлăхĕшĕн, унăн вăйхăвачĕшĕн, ăна чечеклентерессишĕн сасăлатпăр.

Пирĕн хаклă йултăш Сталин, Есĕр пирĕншĕн тăршшипе тивĕçлĕ пулма, пирĕн аслă та хăватлă социалисăмлă тăван çĕршывăн чи шанчăклă та тивĕçлĕ хĕрĕсем пулма, пирĕн тăван анне—ПСК(б) Партин чи шанчăклă хĕрĕсем пулма сăмах паратпăр епĕр.

Сире, пирĕн хаклă учителĕ Сталин йултăш, хамăр йаланах сыхă пулма, тăшмансемпе нихçан çураçми пулма, социалисăмлă харпăрлăха сыхлама, большевисăмла алла илме, пĕлме пĕлмесĕр вĕренсе пыма, техникăна çĕнсе илме, хамăрăн политикăлă тата культурлă пĕлĕве хăпартса пыма сăмах паратпăр.

Есĕр капиталисăмлă йĕри-таврасăх çинчен кăтартса панине пĕр саманта та манмастпăр епĕр, пирĕн тăван çĕршыва сутакансене тĕпĕ-тымарĕпе пĕтерĕпĕр, фашисăмăн троцкисла-бухаринла тата буржуйла-националисла агенчĕсене хаярран тапалтарса пырăпăр,—çапла тума сăмах паратпăр, Сире, пирĕн хаклă тус Сталин йултăш.

Пирĕн хаклă çулпуç тата руководитель аслă Сталин, пирĕн парти, пирĕн правительства, Есĕр чĕнсесĕнех тăван çĕршыва сыхлама çĕре тухма хатĕр. Хĕçпăшалĕсене алла тытса тухма сăмах паратпăр. Хамăрăн уйсемпе сатсене, çĕнтерӳ тунă социалисăмăн аслă та хăватлă державине нихăçан та, никама та памастпăр.

Сыва пултăр никам çĕнтерейми социалисăмлă аслă тăван çĕршыв!

Сыва пултăр çĕнтерӳ социалисăмăн Сталинла Конституцийĕ!

Сыва пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ!

Сыва пултăр халăхсен çулпуçĕ тата тусĕ пирĕн чи йуратнă тăван Сталин йултăш!

Çурçул планне тултарнă

Шупашкарти Водопиянăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи рабочисемпе инженерлă-техникла работниксен коллективĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали куна пысăк ӳсĕмсемпе кĕтсе илессĕ.

Савăт çурçул планне тултарнă. Продукци пахалăхне чылай лайăхлатнă. Пĕрремĕш квартăлта туса кăларнă продукци хисепĕнчен пĕрремĕш суртлă продукци 59 процент пулнă пулсан, иккĕмĕш квартăлти продукци хисепĕнче пĕрремĕш суртлă продукци 92,2 процент шутланат. Брак пачах та пулман.

Рабочисен ĕçукçи хисепĕ те ӳсрĕ.

Савăтра стаханăвĕçсен шучĕ ӳссех пырат. Весем ĕç тухăçлăхне çĕклессе пыраççĕ. Кудрявцев йултăш хайĕн уйăхри нормине 267,4 процент, Калентйĕв—257,4 процент, Казаков—250,9 процент, Павлов—229,9 процент тата Скачкова 185,5 процент тултарнă.

Суйлав умĕнхи ăмăртура Куçмин йултăш бригади малта пырат. Вăл бригăдă савăтăн куçса çӳрекен хĕрлĕ йалавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Т. Иванов.

Пĕтĕм Союзри Йалхуçалăх выставки строительствинче (Мускав).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Виноградник специалисĕ Уразăв Бахбид виноград тĕмĕсене пăхат.

(Союзфото).

Совет Сойузĕнче виноград ĕрчетес ĕç

Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выставкин илемлĕ павилйонĕсенчен пĕри „Виноград ĕрчетес тата ерехсем тăвас ĕçĕн" павилйонĕ пулса тăрат.

Кунта çĕршывăн чи лайăх хуçалăхĕсем тата малта пыракансем хăйсен çитенĕвĕсене кăтартаççĕ. Малти вырăнсенчен пĕрине мĕлйуншар тупăш илекен Кирăв йачĕпе тăракан Анапски колхозĕ йышăнат. Пĕлтĕр çав колхоз 336 гектарлă лаптăк çинче кашни гектарĕнчен 87 центнĕр виноград пуçтарса илнĕ. Тепĕр експонат Орджоникидзе крайĕнчи, Кизлярски районĕнчи „Победа" колхозĕн. Ку колхоз кашни гектартан 115 центнĕр виноград туса илнĕ.

Йатарласа тунă залра тĕрлĕрен ерехсем: Крымри мускатсем тата шампан ерехĕсенчен пуçласа, инçетри хĕвелтухăçĕнче ирĕкре çитĕнекен виноградсенчен тунă портвейнсене çитиччен пуласçĕ.

Павилйонăн уçă галлерейĕсенче виноград тăвас ĕçре ĕçлемели машинăсене—йатарласа тунă гусеничнăй трактăра, плугсене, таранăн илсе çемçетекен тата ытти машинăсене кăтартаççĕ. Вĕсем пурте çĕнĕ машинăсем. Революциччен виноград тăвас ĕçре пĕтĕмпех алпа ĕçленĕ.

Павилйонăн картишĕнче Вăтаçĕр Азири тата Кавказ леш енчи республикăсенчен, Крымран, Украинăран, Краснодар крайĕнчен кӳрсе килнĕ тĕрлĕрен суртлă 600 тĕмĕ виноград лартаççĕ. Çакă вăл Мускавра пĕрремĕш виноградник пулат.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн

Йершипуçĕнчи пуçламĕш парторганизаци (Вăрнар р.) отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн пĕтĕм вăйа хурса политикăлă агитаци ĕçне вăйлатма тытăнчĕ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме кружоксем организациленĕ. 4 колхозра 24 агитатăр ĕçлеççĕ. Агитаци ĕçĕнче коммунистсем малти вырăна йышăнаççĕ.

Кунта агитаци ĕçне кружокра çеç мар, уйра та, урамра та, ăçта колхозниксем ĕçлеççĕ, çавăнта туса пыраççĕ. Акă, хĕрарăмсем тапак лартнă çĕрте ĕçлеççĕ—унта агитатăр. Колхозниксем çул тунă çĕрте ĕçлеççĕ, шашкă сараççĕ. Кунта партире тăман активис Зобăв йултăш кашни кунах суйлав саккунĕ çинчен, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама тăратнă кандидатсем çинчен ăнлантарса парат.

Верховнăй Советсене депутата суйлама тăратнă кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен колхозниксемпе йединоличниксен пухăвĕсенче ăнлантарса параççĕ. Пухăва пырайман карчăксене, старриксене килĕсене кайса вĕрентеççĕ.

Ийунĕн 22-мĕшĕнче колхозниксемпе йединоличниксем Павлăв тата Дубăв йултăшсемпе тĕл пулса калаçрĕç. „Ку кандидатсем хамăр ретрен тухнă çынсем. Çавăнпа епĕр пĕр çын пек пулса вĕсемшĕн сасăлатпăр", тесе йышăнчĕ суйлав умĕнхи пуху.

Агитатăрсене Волкăв парторг куллен ĕçре пулăшса пырат. Вĕсемпе канашлусем иртерет, консультаци парат. Малтанхи вăхăтра стена хаçачĕ тухмасăр тăнă. Тимофейĕв йултăш редактăр пулса ĕçлеме тытăннă хыççăн, кашни ернерех пĕр номĕр стена хаçачĕ тухма тытăнчĕ. Политикăлă агитаци ĕçне йĕркеленĕ хыççăн партире тăман активиссен активлăхĕ хăпарни палăрат. Халĕ икĕ çын сочувствуйушчисен ретне кĕме зайавлени панă. Икĕ кандидата парти членне илнĕ хыççăн кандидатсен группинчен пуçламĕш парторганизаци тунă.

Парторганизаци партилĕ-политикăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе сыхăнтарса пырас тĕлĕшпе çителексĕр ĕçлет. Халăх тăшманĕсем колхозсене организаципе хуçалăх йенчен начарлатса йарас, тесе хăйсен киревсĕр ĕçĕсене туса пынă. Анчах тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерессине питĕ йерипен пырат. „Трудовик", „Крупская", „Авруй" тата „1-мĕш май" колхозсенче урапа тата хамăт таврашсене колхозниксен килĕсене салатса пĕтерне. „1-мĕш май" колхозра лашасене хытă чуптарса пăсса пĕтернисем пулнă. Йалхуçалăх ертелĕн уставне пăсас йăла ытти колхозсенче те чылай саралнă. Парторганизаци ку йĕркесĕрлĕхсем çинчен парти пухăвĕнче сӳтсе-йавнипех лăпланса ларнă.

Тырпул пухма хатĕрленес ĕçре те çитменлĕхсем чылай. „1-мĕш май" колхозра тырă вырмали машинăн пайĕсем çук, çурла-савасем хатĕр мар. Крупская йачĕпе тăракан колхозра та пĕр çурла та шăллаттарман, йалхуçалăх машинисене хатĕрлесе çитермен. „Авруй" колхозăн клевĕрĕ çум айне пулса ларнă, т. ыт. те.

Пуçламĕш парторганизацинче 6 коммунис. Парти райкомĕ вĕсене парти историне вĕренме район центрне çӳреме хушнă. Çапла вара коммунистсен 8—10 километр таран çӳремеле пулнă.

Çакă вăл парти обкомĕн решенине хисепе илменни пулат. Кружок руководителĕ Гаврилăв йултăш (райĕçтăвком председателĕн заместителĕ) ĕçлемен пирки, кружокра апрел уйăхĕ иртнĕренпе пĕр занятти те пулман. Апрел уйăхĕччен те занятисем йĕркелĕ иртмен.

— Епĕр хамăр йалта кружок организацилесси çинчен темиçе хут та ыйту лартнă. Кун çинчен райком инструктăрне, Гусĕв йултăша та, каласа панă. Парти райкомĕ пайан кунччен пире кружок туса пама тăрăшмасть, Гаврилăв кружокĕ те ĕçлемест,—тет Волкăв парторг. Коммунистсем ыйтăва тĕрĕс лартаççĕ. Парти райкомĕн кĕске вăхăтрах ку ĕçе татса памала.

П. П.

Активиссем партине кĕреççĕ

Шупашкар хулинче партире тăман темиçе çĕр активиссем доверённăйсем, агитатăрсем, суйлав комиççи членĕсем пулса ĕçлеççĕ. Сăмахран, хулари 58 доверённăйран 26-шĕ партире тăманнисем. Халĕ партире тăман активиссем партине кĕме зайавленисем параççĕ. Акă, Г. Васильев тата Улитина йултăшсем доверённăй пулса ĕçлеççĕ, вĕсене иккĕшне те парти кандидатне илнĕ.

Çавăн пекех, суйлавçăсем хушшинче хĕрӳлĕ ĕçлекен агитатăрсене С. Тарасăв (çукунçул хывнă çĕрте бригадир пулса ĕçлет), Ластăчкина (Коммунисла йалхуçалăх аслă шкулĕ), Шабров („Стаханăвла хăвăртлăхшăн" хаçат редакци) йултăшсене т. ыт. парти ретне илнĕ.

Потапăв йултăш Шупашкарти 1-мĕш суйлав округ комиççи членĕ пулса, Йегорăвă йултăш Шупашкарти 12-мĕш суйлав участка комиççи секретарĕ пулса ĕçлеççĕ. Вĕсене те парти ретне илнĕ.

Ийун уйăхĕнче 16 çынна партине илнĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ суйлав кампанинче активлă ĕçлекен йултăшсем.

Стаханăвка

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕмĕрле хула суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат В. К. Каçйанăвă.

Виçĕ çул кайала Верă Каçйанăвнăна пысăк инкек килсе çакланнă: ăна иккĕмĕш группă инвалида куçарнă. Мĕн пĕчĕкренпех ĕçлеме йуратаканскере ĕçлеме хушманни ăна „сывлама хушман пекех туйăннă". Çын сывлăшсăр пурăнаймасть. Верă Каçйанăвă та ĕççĕр, производствăсăр пурăнма пултарайман. Анчах мĕн тăвас-ха? Тухтăрсем нимĕнле ĕçе те ĕçлеме хушмаççĕ.

— Шухăшлăр-ха есĕр, — тет Верă Каçйанăвнă халĕ çав вăхăта аса илсе, — шухăшлăр-ха, ман йултăшсем цехра ĕçлеççĕ, вĕсем ĕçленине куратăп, — мана ĕçлеме йурамасть, алăсем пур — вĕсемпе те ĕçлеме хушмаççĕ. Пĕччен пурăнни маншăн çав тери йăвăр пулчĕ, тӳсме çук чун ыратрĕ, — тет вăл.

Анчах нимĕн те тума çук ăна цеха йамаççĕ, сывалма хушаççĕ. Икĕ ерне выртнă хыççăн Верă Каçйанăвнă тӳсеймест, çăмăлтарах ĕççене ĕçлеме пуçлат. „Мана станокпа ĕçлеме йурамасть, анчах эпĕ урăх ĕçпе халăха усă кӳме пултаратăп" — шухăшланă вăл.

Калас пулать, производствăра ĕçленĕ чухне те Верă Каçйанăвă общĕствăлă ĕçрен пăрăнса тăман, çапла çеç мар, çав ĕçре те ыттисенчен малта пынă, çавăнпа ăна завком членне, Чăвашсовпроф членне, кайарахпа Крайсовпроф членне суйланă. Халĕ ĕнтĕ вăл мĕн пур вăхăтне, мĕн пур вăй-хăватне общĕствăлă ĕçе панă, çăмăл кавалеринче ĕçленĕ, профсойуз йенĕпе ларйоксен, магазинсен, столовăйсен ĕçĕсене тĕрĕсленĕ, халăх пурлăхне салатакан, тăкаклакан, вăрăсене тăрă шыв çине кăларса сут аллине панă. Тĕрлĕ политикăлă кампанисенче ырми-канми ĕçленĕ.

Çав вăхăтра Çĕмĕрле тухтăрĕсем, унăн сывлăхне питĕ хытă сăнаса, ăна чиртен сыватма тăрăшнă.

— Хам ĕçленĕ цеха кайсан ыттисем ĕçленине куратăм те, чăтма çук кăмăл хуçăлаччĕ, кайарахпа пĕр вăхăтлăха кайми пултăм,— тет Верă Каçйанăвă.

Верă Каçйанăвă производствăна кайасшăн, мĕн пур шухăшĕ унăн çавăн çинче, ирхине те, каçхине те çав шухăш канăç памасть унăн хастарлă чĕрине. Тухтăрсем патне кайса канаш ыйтать, — хăйĕн чĕри вăрканине каласа парать, производствăна йама йăлăнать.

— Йарăр мана цеха, хам ĕçленĕ бригадăна, епĕ сывалнă, епĕ темĕн те ĕçлеме пултаратăп. Курă, акă, алăсем йепле çĕнĕрен хăмланчĕç, сывă чухнехи пекех, — шӳт туса пăхать вăл.

Тепĕ ернерен тухтăрсем: „Верă Каçйанăвăн сывлăхĕ чылай самайланнă, çăмăл ĕç ĕçлеме йурать", тесе справк панă. Çакăн пек справкăна илсессĕ Верă Каçйанăвă комбинат канурне васкаса çитет.

Кадрсен пайĕнче вăл вăхăтра пĕр Белов хушамăтлă бӳрократ ларнă (кайран ăна тĕрлĕ ирсĕр ĕççемшĕн вырăнтан та, партирен те кăларнă). Комбинатра Верă Каçйанăвă пилĕк çул хушши ĕнтĕ чи лайăх ударница шутĕнче тăни çинчен, вăл йепле тĕлĕнмеле хастарлă ĕçлени çинчен, унăн чаплă ĕççĕсене пур çĕрте те пĕлсе тăни çинчен çав бӳрократ пĕлнĕ, анчах, астăвăр-ха, мĕнле „вывăд" тунă Белов:

— Вăт мĕнле, гражданкă Каçйанăвă, халĕ комбината рабочисем кирлĕ мар, çавăнпа илме пултараймастпăр. Поньатнă? Тухса кайăр кунтан, манăн санпа калаçма вăхăт çук, канăç парăр мана. Поньатна!—хушса хунă вăл пуçран кисĕппе çапнă пек.

Верă Каçйанăвă ăна каласа ăнлантарасшăн, анчах „начальник" Белов итлемест, унăн хутсем пăхмала, чĕрĕ çын ун шучĕпе нимĕн те мар. Верă Каçйанăвă ун патĕнчен йĕрес пек тухса кайнă, чĕри вăркана унăн, чунĕ тарăхнă.

„Завкома кайса калатăп, — тенĕ вăл ăшĕнче,—профсойузăн хута кĕмеле".

Çак шухăшпа вăл иккĕмĕш хутлăха завкома хăпарать.

Завкомра ун чухне Самайĕв йатлă халăх тăшманĕ ларнă. Верă Каçйанăвă завком членĕ, Чăвашпрофсовет членĕ, Крайсовпроф членĕ иккенне, вăл нумай пулмасть йăвăр чирпе асапланнине те Самайĕв тăшман лайăх пĕлнĕ, шăп çавăнпа ĕнтĕ Верă Каçйанăвă ун патне жалăбăпа пырсан, ăна пулăшма мар, унтан мăшкăласа кулнă. Йулашкинчен вăл, ĕлĕк чиркӳре пупсем проповĕть каланă пек васкамасăр, çапла каласа „йăпатать" çилли тулса çитнипе чĕтресе тăракан Верă Каçйанăвăна.

— Кадр пайĕ хăй ĕçне хăйех аван пĕлет, унта та парти членĕ Белов йултăш ларать, епĕ унăн ĕçне тĕрĕслеме пултараймастăп. Çапла! Тĕрĕслеме пултараймастăп! Кайма пултаратăн, манăн вăхăт çук санпа калаçса тăма,—тенĕ вăл йулашкинчен, каллех пуçран чукмарпа çапнă пек.

— Хам та тĕлĕнетĕп,—тет халь кулкаласа Каçйанăвă йултăш.—Тӳсейменнипе вара унăн пăчă пӳлĕмĕнчен чупса тухрăм та, шăла çыртса килеле васкаса утрăм...

Верă Каçйанăвă йултăш тепĕр кунне завкома пырса хытă тавлашать, уншăн ăна халăх тăшманĕ Самайĕв „склочница" тесе кличкă парать.

Анчах тĕрĕслĕх çийеле тухассине шанакан, ĕненекен çынна, тăшмансемпе кĕрешме нимĕнле кличкă та, нимĕнле мăшкăл та хăратаймасть. Пирĕн Верă Каçйанăвă та çавăн йышши:—тĕрĕслĕх йаланах çийеле тухассине пĕтĕм чĕререн шанакан çынсенчен пĕри.

Кĕрешсен-кĕрешсен Каçйанăвă йултăш шалт аптăраса çитет, халăх тăшманĕсем ун чухне пĕр-пĕрне пулăшса тăнă, вĕсемпе кĕрешме питĕ йăвăр пулнă. Мĕн тăвас? Тата ăçта кайса калас? Çав вăхăтра вăл пирĕн аслă çулпуçĕ Сталин йултăш пичет çинчен каланă сăмахĕсене аса илнĕ.

Виçĕ çул кайала, 1935 çулти ийунĕн 24-мĕшĕнче „Красная Чувашия" хаçатра „Издевательство" йатлă статйа тухрĕ. Çавăн хыççăн тин тăшмансем Верă Каçйанăвăна пĕр вăхăтлăха кăшлама чарăнчĕç. Тепĕр уйăхран вĕсем ăна тата тапăнма пуçланаччĕ, анчах нимех те тăваймарĕç. Пролетари диктатурин хурçă пек çирĕп алли тăшмансене тĕпĕ-тымарĕпех çапса çĕмĕрчĕ. Комбинатра сăтăр туса пурăннă Самайĕв йышши халăх тăшманĕсен те йулашки кунĕ çитрĕ. Тĕпĕ-йĕрĕпе аркатрĕç фашисăмăн тискер те хăрушă агенчĕсене.

Халĕ пирĕн çĕршывра пур çĕрте те, пур кĕтесре РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пырать. Телейлĕ çĕршывăн чи йуратнă, хастарлă, лайăх ывăлĕ-хĕрĕсене Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата тăратать ĕçхалăхĕ.

Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекен рабочисем, инженерсем, служăщчисем, пĕр шухăшлă пулса, хăйсен хушшинчен ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Верă Каçйанăвнă Каçйанăвă йултăша кандидата тăратрĕç.

— Епĕр ăна шанатпăр, вăл халăх тăшманĕсемпе пĕр чарăнмасăр кĕрешрĕ, малашне те кĕрешĕ, вăл пирĕн чи лайăх стаханăвкă, уншăн пурте сасă паратпăр,—теççĕ комбинатра ĕçлекенсем.

Верă Каçйанăвă чăнах та пĕтĕм комбиначĕпе чи лайăх та хастарлă стаханăвкă. Малта епĕр унăн усăлă ĕçĕсен пĕр йенне, вăл хăйне хĕрхенмесĕр тăшмансемпе кĕрешнине асăнтăмăр. Производствăра та калама çук аван ĕçлет вăл. Каçал апрелĕн 8-мĕшĕнче пĕр çменăра нормăна—557 процент тултарнă, тата çав уйăхрах 29-мĕшĕнче—564 процента çитернĕ. Йепле савăнмасăр тӳсес тетĕн çавăн пек стаханăвла ĕçленине курсассăн? Йепле йуратса хисеплеместĕн çавăн пек пысăк хастарлă çынсене? Пурте вĕсем пысăк чапа, пысăк хисепе тивĕçлĕ.

Пĕрре çапла пулчĕ,—епĕр цеха пынă вăхăтра темшĕн станоксем шавлама чарăнчĕç. Часах паллă пулчĕ: чĕртавар çук мĕн. Верă Каçйанăвă станок чарăнсанах тепĕр ĕçе тытăннă, ахаль ĕççĕр тăрас килмест унăн: детальсене виç е пăхать, майласа купаласа хурать, станокне шăлкалать, ун йĕри тавра сапаланнă çӳп-çапсене тасатать.

— Хăш чухне чĕртавар çителĕксĕр пулни ĕçе питĕ кансĕрлет,— терĕ вăл пухнă çӳп-çапне пĕр йешчĕке купаласа.—Акă, пайан 230 процент çеç тултартăм, намăс, калама намăс!—хушса хучĕ вăл аллине шăлкаласа.

Вара Каçйанăвнă Каçйанăвă кирек мĕнле ĕçе те пысăк хавасланăхпа, питĕ тăрăшса, чунне парса ĕçлет, пуринчен ытла вăл производствăна йуратать.

Çамрăкла, ача чухнех вăл нуша курса ӳснĕ. Вуннилĕк çула çитсен, ашшĕ вилнĕ, тăлăха йулнă, унăн пурнăçĕ тата ытларах начарланнă. Нăçта кайма аптăраса, вăл пĕр кулак патне ĕçлеме кĕнĕ.

Каçйанăвă йултăш çав вăхăта аса илсессĕн:

— Çав тери пысăк нуша куртăм епĕ унчухне. Талăкра 17—18 сехет ĕçлесе, 12 пус укçа илеттĕм, уйăхне 3 тенкĕ те 60 пус. Çĕрле вара хулсене çĕклеме те çукчĕ, шăмшак ырататчĕ.

Качча тухсан упăшкипе пĕрле Сарапуль округне ĕçлеме кайнă. Унта вĕсем Кустовски йалĕнче „Тĕрĕс çул" коммунăра виçĕ çул ытларах ĕçленĕ.

Кунта çакна астутарса хăвармала: коммунăра пурăннă чухне те вăл хăйĕн хастарлăхĕпе пĕтĕм çынсене тĕлĕнтернĕ: хĕлĕпе пĕр пĕччен 18 ĕне астуса пурăннă, вăл пăхакан ĕнесем сĕт нумай панă. Çулла ĕнесем кĕтӳре çӳренĕ вăхăтра тимĕрçĕ лаççинче тимĕрçĕ ĕçне ĕçленĕ: урапа шиналанă, йалхуçалăх машинисене йусанă, витре тĕпленĕ.

— Акă унта ĕçленĕ чухне пулнă паллăсем,—кăтартать вăл аллисенчи хуралнă вырăнсене,—ăнсăртран тимĕрпе пĕçертсен çав вырăна паллă пулса йулнă.

Тимĕрçĕ лаççи вальли кăмрăк кирле пулнă, анчах таврара кăмрăк сутакан пулман. Мĕн тăвас? Тупас пулать кăмрăк, унсăрăн ĕçлеме çук. Тăрăшсан тем те тума пулать. Верă Каçйанăвă ик виç хĕрарăма пĕрле илет те кăмрăк çунтармалли вырăн тума кайать. Вырăнĕ пулчĕ, вăрман сывăх та пысăк, мĕнчул кирлĕ çавăн чул вута пур, вĕсем кăмрăк хатĕрлеме пуçлаççĕ.

— Тимĕрçĕ лаççи кăмрăк çуккипе хупăнса ларасчĕ,—ĕçлеме пуçларĕ.

Чăваш республĕкне таврăнсан вăл малтан „Йединство" хапрăкĕнчи курса вĕренме кĕнĕ, унтан вĕренсе тухсан 1931 çулта Октябĕр уйăхĕнче Çĕмĕрлене пырса комбината ĕçлеме кĕнĕ. Çичĕ çул хушши ĕçлет вăл комбинатра. Примерлă ударница пулнă, халĕ чи лайăх стаханăвкă.

Сергей Йалавин.

Америкăра Германи шпионĕсен центрне тупса палăртнă

Америкăра Германи шпионĕсен центрне тупса палăртни çинчен, Германин 18 шпионне суда пани çинчен пĕлтернĕччĕ.

Америка пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, тупса тăрă шыв çине палăртнă Германи шпионĕсем Йапони шпионĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçленĕ, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен çар вăрттăнлăхĕсем çинчен пĕр-пĕрне пĕлтерсе тăнă. Америкăри шпионла ĕçе Германи правительствин представительсем тӳремĕнех Германирен кăтартусем парса йертсе пынă. Çак шпионла ĕçсем тунăшăн айăпланакансенчен чылайĕшĕсем йе Германири официаллă çынсем пулса тăраççĕ, йе Германи агенчĕсем, нумайах пулмаст Германине тарса пынаскерсем пулса тăраççĕ. Судпа айăпланакан 18 çынтан тăваттăшĕ çеç халљхи вăхăтра Њӳ-Йоркра хупса усранă çĕрте суд тăвасса кĕтсе пурăнаççĕ.

Хаçатсем уйрăмах çакна паллă туса çыраççĕ: Америка влаçĕсем Германин официаллă представителĕсене уççăнах айăплаççĕ, вĕсем айăпласа çырнă заклљученийĕнче тӳрех Германи правительствине асăннă.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен государствă департаменчĕ айăпласа çырнă заклљученийĕнче Германине асăннине ырланă, Америка правительстви Њӳ-Йорк округĕнчи прокурора Германи шпионĕсене хирĕç, вăл шутра çав шпионла ĕçе хутшăннă Германин официаллă представителĕсене хирĕç те, тапратнă процесс ĕçĕсенче мĕнле тăвас тенĕ, çавăн пек тума ирĕк панă.

(ТАСС).

Йапони Китайра вăрă-хурахланни

Йапони çарĕсем тытса илнĕ Шанхай—Ханчжоу районĕнче (Вăтам Китай), йапонĕцсем пырса кĕреччен пăрахса тухса кайма ĕлкĕреймен Китай халăхĕ тӳсме çук йавăр асапра пурăнать. Йапонĕцсем çаратса, нимсĕр хăварнă территоринче пурăнакан Китай халăхĕ выçăпа антрать. Тĕрлĕ чир-чĕрсем сарăлаççĕ. Пĕр Ханчжоу—Фуйан районĕнче кăна выçăпа антраса йе Йапони войенщчини персе пăрахнипе вуњă пин ытла китайĕц вилнĕ. Фуйан районĕ ку тĕлĕшпе „вилĕм тӳремлĕхĕ" пулса тăрать. Йапони артиллерийĕ хулана ним хăвармиччене çĕмĕрсе тăкнă. Ханчжоупа Фуйан хушшинчи территори çинче выçăпа антраса вилнисен йе йапонĕцсем вĕлернисен кĕлеткисем сапаланса выртаççĕ.

Йапонин каратĕљнăй отрйачĕсем китайĕцсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкаççĕ, вĕсем китайĕцсене „партизансемпе çыхăнса ĕçленĕ" тесе персе вĕлереççĕ. Йапони салтакĕсем хĕрарăмсенчен ирсĕррĕн мăшкăланă тĕслĕхсем те пиншерĕн шутланаççĕ. Кунсăр пуçне, йапонĕцсем вăрă-хурахла ĕççене те кашни кунах туса пыраççĕ.

(ТАСС).

Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан совхоз (Азербайджан ССР) тĕштырăсене пуçтарса кĕртнĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Комбайнсем тырă выраççĕ. Совхоз руководителĕсем тырă пулса çитнине пăхаççĕ.

(Сойузфото).

Çĕнĕ тырпула йышăнма халех хатĕрленмеле

(Йалкорсен çырăвĕсем тăрăх)

Кăçалхи вăйлă тырпула пуçтарса кĕртес вăхăт нумай та йулмарĕ ĕнтĕ. Ыраш ,калчисем шăркана ларса иртеççĕ. Улăх курăкĕсем, вĕсемпе пĕр танах тата акнă курăксем те çулмала пулса çитеççĕ. Тепĕр ик-виçĕ пилĕкунлăхран утă çулма тухмала та пулса тăрать. Халљ ĕнтĕ кашни колхозăн утă çулма тата тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленсе çитмеле.

Малта пыракан колхозсем, вăйла тырпулшăњ тата йышлă вылљăх-чĕрлĕхшĕн чăн-чăн болљшевикла кĕрешекен колхозсем çапла тăваççĕ те. Шăхасан районĕнчи „Свобода" колхоз, Н. Михайлăв йалкор пĕлтернĕ тăрăх, çуртри калчисене лайăх пăхса ӳстерес тĕлĕшпе ĕçленипе пĕрлех тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе те аван хатĕрленет. Колхозăн 4 жнейка пур. Вĕсене халљ йусаса лартнă çеçте мар, тата запаслă пайĕсене те хатĕрлесе хунă.

„Свобода" колхозра кашни бригадăрах çава-çурласене те туптатма тата шăллама тытăннă. Урапасене йусаса хунă тата тырă ампарĕсене те тасатса хунă.

Çав районтах Атнашри Кирăв йачĕпе тăракан колхоз та тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе çак кунсенчех хатĕрленсе çитет. Ку районта „Пинер" колхоз тата Тељмăн йачĕпе тăракан колхоз та йапăх мар хатĕрленеççĕ.

Вăрнар районĕнчи „Победа" колхоз тырă вырмали машинăсене çеç мар, кĕрхи тырăсене акма сейăлкăсене те йусаса хатĕрленĕ. Çава-çурласене туптатма тата шăллатма панă.

Йетĕрне районĕнчи „Хĕрлĕ Хучаш" колхоз жнейкăсене йусаса çитерсе, машинăсемпе кам ĕçлемелине те палăртса хунă. Урапасене тата ытти ĕçхатĕрĕсене те хатĕрлесе çитернĕ. Уй ĕçĕ вăхăтĕнче ача йаçли ĕçлеме мĕн кирлисене те хатĕрлесе хунă. Елĕк районĕнчи „Алмаз" колхоз тырпулсене пуçтарса кĕнĕ чух кирлĕ транспăрт хатĕрĕсене пурне те хатĕрлесе хунă. Утă çулма 120 çава туптатса хатĕрленĕ.

Калчасене пăхса ӳстерес ĕçе лайăх организацилене тата тырпулсене пуçтарса кĕртме лайăх хатĕрленекен колхозем нумай. Анчах йулса пыракан колхозсем те сахал мар-ха.

Акă, Елĕк районĕнчех, Тукач колхоз тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленме тытăнман та. Колхозăн жнейкăсем те çук. Çавăн пирки çурласемпе вырмала пулать. Вĕсем те хатĕр мар.

Ыхра-Çырминчи „Делегатка" колхозăн (Вăрмар р.) витнĕ итемĕсем çинче çӳп-çапсемпе улăмсем выртаççĕ. Тырă вырмали машинăсемпе урапасем те ванчăккинех лараççĕ.

Çавалкас Мăратри „Çутала" колхозра та (Вăрнар р.) çавăн пекех. Кунта çум çумлас ĕçе те пачах тытăнман. Çавăн пек колхоз руководителĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе йертсе пыма тăрăшманнине кăтартаççĕ.

Халљ кашни колхозăн, уйрăмах кайа йулса пыракан колхозсен, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийуњĕн 16-мĕшĕнче „тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленессипе тырпулсене пăхса çитĕнтересси çинчен" йышăннă постановленийе колхозниксем хушшинче сӳтсе-йавса, çав ĕçсем тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумалине палăртса тухса, ĕçе хĕрӳлĕн тытăнмала.

Çумкурăксенчен çилос тăваççĕ

Çĕрпӳ районĕнчи „Коминтерн" колхозри комсомолĕцсем пуçарнипе колхозра калчасем çинчи уйри çумкурăксене пухса пурĕ 24 тоннă çилос хывса хăварнă.

Ш. Г.

ТАВАШКАССИНЧИ (Çĕрпӳ р.) „Коминтерн" колхоз хĕл вăхăтĕнче вылљăхсене çитерме апат хатĕрлеме тытăнчĕ. Çак кунсенче тĕрлĕрен курăксенчен 24 тоннă çилос хывса хăварчĕ.

Г. Шумилăв.

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче тата ССР Сойузĕн Совхозсен Халăх Комиссариатĕнче

Комбайнерсене ĕçшĕн тӳлес йĕрке

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе ССР Сойузĕн Совхозсен Халăх Комиссариачĕ „Комбайнерсене ĕçшĕн тӳлес йĕрке çумне çĕнĕ хушу тăвасси çинчен" приказ кăларнă.

Пысăк тухăçлă тырпулсен лаптăкне пуçтарса кĕртнĕ чух комбайнерăн ытларах ĕçлемеле пулать. Çавăн пек лаптăксем çинче ĕçленĕ чух комбайнерсем тăрăшса ĕçлемеле пултăр тесе, халиччен пулнă тӳлес йĕрке çумне çакăн пек хушусем кĕртнĕ:

15 фут сарлакĕш илекен комбайн çинче ĕçлекен комбайнер, миçе гектар пуçтарса кĕртнине кура халиччен пулнă йĕрке тăрăх тӳленисĕр пуçне тата кунне 80 центнĕртан ытла тĕшлесе кăларнă кашни центнĕршăн, мĕн чухлĕ тырă кăларнине кура, 15 пусран пуçласа 25 пуса çитиччен премиi-надбавкă илет. 20 футлă комбайн çинче ĕçлекен комбайнер та, кунне 90 центнĕртан ытла çапса панă центнĕршăн çавăн пекех надбавкă илет.

15 фут сарлакĕш илекен комбайн çинче ĕçлекен комбайнер, тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ пĕр сезон хушшинче 2000 центнĕртан ытла пулнă кашни центнĕршăн 10-шер пус преми-надбавкă илет. Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ сезонра тĕшлесе панă тырă 3.000 центнĕртан иртет пулсан, вара комбайнер 2.000 центнĕртан ытла пулнă кашни центнĕршĕн 15-шер пус надбавкă илет.

20 футлă комбайн çинче ĕçлекен комбайнер, сезон хушшинче 2.400 центнĕртан ытла тĕштырă çапса парсан, çав хисепрен ытларах пулнă кашни центнĕршăн 10-шер пус преми-надбавкă илет, 3.500 центнĕртан ытла çапса панă пулсан, вара 2.400 центнĕртан ытла панă кашни центнĕршăн 15-шар пус надбавкă илет.

Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра комбайнер аггрегат начаљникĕ пулса ĕçлет пулсан, ăна пĕр кун ĕçлененшĕн тӳленĕ хак çумне 10 процент хушса тӳлемеле.

Комбайнпа пуçтарса кĕртнĕ чух, комбайнер помошникне ĕçлесе панă кашни гектаршăн 0,45 ĕçкунĕ çырса памала; пĕр комбайн туртса пыракан трактăр çинче ĕçлекен трактăриса ĕçлесе панă кашни гектаршăн 0,50 ĕçкунĕ çырса памала; икĕ комбайн туртса пыракан трактăр çинче ĕçлекен трактăриса ĕçлесе панă кашни гектаршăн 0,35 ĕçкунĕ çырса памала.

Комбайнер ваљљи йышăннă пĕр кунхи ĕç норминчен иртерсе ĕçленĕ кашни гектаршăн трактăриссемпе комбайнер помошникĕсем ĕçкунĕсен хисепне малта кăтартнинчен çуррине хушса ытларах çырса памала.

(ТАСС).

Колхозри маçтерской

ЙЕТĔРНЕ. Кăташри „Пионер" колхоз кăçал хуçалăхра кирлĕ йапаласене йусаса тăракан маçтерской уçрĕ. Маçтерскойĕнче çуна-урапасене, машинăсене т. ыт. те йусаççĕ, катка-пичкесем тăваççĕ.

Халљхи вăхăтра маçтерскойĕнче пилĕк çын ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне пысăк хаваслăхпа тăваççĕ. Макçимăв, Абрамăв, Никитин тата ытти йулташсем нормăна йаланах 110 процентран кайа мар тултараççĕ.

М. Моиçейĕв.

Кăмрăк тата креплесем

ТУРХАН. Полукирери вăрман савăчĕ çумĕнче кăмрăк тата креплесем тăвакан производствăсем ĕçлеме тытăнчĕç. Кăçал 40 тоннă кăмрăк, 1000 штук крепле туса кăларма палăртнă. Таварсене колхозсене тата колхозниксене сутаççĕ.

Ив. Архипăв.

Стаханăвĕцсен канăвĕ

Лини хывнă çĕрте стаханăвла ĕçлекен рабочисемпе служăщисенчен нумайĕшĕ отпуск вăхăтне канмали çуртсенче тата екскурçисенче çӳресе ирттереççĕ. Комсомолĕцсен бригадинчи Макçимăв, Кудрйашов, Йевдокимăв, Колбасăв тата ытти йулташсем канмали çуртсене карĕç. Нумайĕшĕсем çитес кунсенче Мускава екскурçине кайаççĕ.

С. Тарасăв.

Пирĕн бригадă стахановла бригадă пулать

Епĕр Канаш-Шупашкар чукун-çул строительствинче ĕçлеме пуçланăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Анчах пирĕн бригада ку таранччен нормăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраймасан, 70—80 процент çеç тултарнă.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ май, епĕр хамăр хушăра социализмлă ăмăрту пуçартăмăр. Çавăнпа пĕрлех Борисăвпа Гаврилăв йулташсен бригадисемпе ăмăртăва тухрăмăр. Çакăн хыççăн кашни хăйĕн ĕçне лайăх пахалăхпа, вăхăтра тăвассишĕн кĕрешме тытăнчĕ. Ĕç хăвартлăн малала кайма пуçларĕ. Халĕ пирĕн бригадă нормăна ытлашшипех тултарать. Ийуњĕн 19-мĕшĕнче епĕр нормăна 150 процент тултартăмăр.

Ĕç тухăçлăхне тата та ӳстерме пулать. Анчах ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ тата йусав пулманни чăрмантарать. Хатĕр çук пирки рељсесене çĕклесси вăрăма чăсăлать. Епĕр участкă руководителĕсенчен тата та тухăçлăн ĕçлеме условисем туса пама ыйтатпăр.

Пирĕн кану вăхăчĕ савăнăçлă иртет. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче тата ĕç хыççăн пухăнса хаçат-журналсем вулатпăр, суйлав çинчен вĕренетпĕр. Агитатăр Петров йулташ кулленех йулашки хыпарсене каласа парать.

Епĕр суйлав кунне—ийуњĕн 26-мĕшне хамăр бригадăна стахановла ĕçлекен бригада туса кĕтсе илетпĕр. Вара [illegible] уйава стахановецсем йатне илнипе кĕтсе илсе, хамăр сасăсене коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн—Антонăвпа Григорйевпа йулташсемшĕн паратпăр.

Бригадă членĕсем хушшипе

Çеменăв.

Кадр хатĕрлессине хакламаççĕ

Чăвашкуљпромсойуз ийуњĕн 1-мĕшĕнче, Шупашкар хулинче, куљтработниксен 4 уйăхлăх курсне уçрĕ. Курсра пурĕ 20 çын вĕренмелеччĕ, анчах паянхи куна 10—12 çын кăна вĕренеççĕ.

Куљпромсойузăн кадр пайĕ (Корытникăв) куљтработниксен курсне çителĕклĕ хатĕрленмесĕрех уçрĕ. Курсантсем ваљљи хватер тупса хатĕрлемен пирки нумай ертелсенчен (Шаккăл—Архипăв, Шуркасси—Гурйĕв т. ыт. те) килнĕ йулташсем кайала кайрĕç.

Кивçурт Марка, Мăнал, Ыхракасси (Йшлей р-нĕ), Çĕн—Чураш (Йĕпреç р.) аласта ертел председателĕсем кадр хатĕрлессине хакламаççĕ. Вĕсем курса йама палăртнă йулташсене йамасăр тăраççĕ. Апаккасси (Çĕрпӳ р.) аласта ертелĕн правленийĕ вĕренме йанă курсанта вăхăтра укçа куçарса памасăр вĕренме пăрахтарчĕ.

Н. М. Йашков.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕн" ĕнерхи (ийуњĕн 24-мĕш) номерĕнче тухнă „Чăвашгиз редактăрĕсем „редакцилеççĕ"... статйан 2-мĕш абзацĕнче, корректура работникĕсен айăпĕпе, Пожеданăв Александр Иванăвич хушаматне пăтраштарса йанă.

Çак айăпшăн корректăр Медведĕв, каçхи редактăр Николайĕв, дежурнăй пулнă Константинăв йулташсем çине администраци йĕнĕпе взыскани хунă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Нацилĕ çичĕ республикăн спартакиади

Физкуљтурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри Комитечĕ йышăннă тăрăх, кăçалхи августăн 16—18-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче автономлă çичĕ республикăн çулахи спартакиади пулса иртет. Çичĕ республикă та (Коми АССР, Башкир АССР, Удмурт АССР, Мари АССР, Мордва АССР, Тутар АССР тата Чăваш АССР) спартакиадăна хутшăнма килĕшӳ панă. Вĕсем халљхи вăхăтра командăсем палăртса, спартакиадăна хатĕрленеççĕ.

Çак спартакиадă умĕнче тăракан задачă вăл—нацилĕ автономлă республикăсем массăлă физкуљтурăпа спорт ĕçĕнчи пĕр-пĕрин опычĕпе паллашасси, çăмăл атљотика, пăшалтан пересси, шыв спорчĕ, велоçипед т. ыт. тĕлĕшпе массăлă вĕренӳлĕ спорт ĕçне вăйлатасси пулать.

Спартакиадă программине спортăн çак йĕнĕсем кĕреççĕ: çăмăл атљотикă, пăшалтан пересси, шывра ишесси, весласемпе ишесси, шыва сикесси тата велоçипед.

Çăмăл атљотикă тăрăх программăна арçынсем 100, 400, 1500, 5.000 метр хушăна чупассине тата 10.000 метр кросс кĕртнĕ. Шведла естафета-командлă чупӳ, ку чупу вăхăтĕнче кашнийех черетпе хăйĕн дистанцийне чупса тухать, тепĕр тапхăрне (800 + 400 + 200 + 100 метр) чупакана естафетă патакне тыттарать. Хĕрарăмсем 100, 500, 800 метр чупасси, шведла естафета, 2000 метр кросс. Арçынсем малала, çӳлеле, патакпа сикесси; хĕрарăмсем малала, çӳлеле сикесси. Диск, сăнă, гранатă ывăтасси тата йĕтре тĕксе йарасси.

Пăшал перекенсен командине спартакиадă программинчи ытти спортсене хутшăннисенчен тăваççĕ. Пĕчĕк калиберлă винтовкăран 25 метр хушăран переççĕ. Командăри кашни çын 100 очко илме май пур çĕртен 50 очкоран кайа мар илмеле, мĕншĕн тесен командăсем малти вырăна йышăннине палăртнă чухне 50 очкоран кайа тунă резуљтатсене шута илмеççĕ. Çак услови вăл—пирĕн физкуљтурă организацисенче стрелковăй ĕçе халех тивĕçлипе сарса йама хушать, мĕншĕн тесен спорт обшчĕствисенче стрелковăй спорт халљхи пекех начар тăрсан епĕр спартакиадăра малти вырăна йышăнассишĕн ăнăçлăн кĕрешме пултараймастпăр.

Шывра ишес тĕлĕшпе спартакиадă программине çакăн пек дистанцисем кĕртнĕ: арçынсем—ирĕклĕ стил 100 тата 400 метр, брасс 100 метр, çурăм çинче 100 метр, гранатăпа 50 метр; хĕрарăмсем—ирĕклĕ стил 100 тата 200 метр, брасс 100 метр, çурăм çинче 100 метр.

Шыва сикес тĕлĕшпе кашни командă 4 çын тăратать (2 арçын, 2 хĕрарăм). Программăра вышкă çинчен тата трамплин çинчен шыва ирĕклĕн сикесси виçĕ тĕрлĕ пулать.

Весласемпе ишес тĕлĕшпе: байдаркă—арçынсем 1000 метр, хĕрарăмсем 500 метр; иккĕн ларса уçăлса çӳремелли шљупкă (арçынсемпе хĕрарăмсем)—1000 метр.

Велоçипедсемпе—арçынсем 50 километр чупаççĕ, кросс 20 километр; хĕрарăмсем—20 километр, кросс—1000 метр.

Спартакиадăна хутшăнакан кашни республикă командинче 37 çын пулать.

Чи нумай очко илнĕ командă спартакиадăра малти вырăна тухать. Спартакиадăра малти вырăна тухас пулсан çăмăл атљотикăпа чи нумай очко илмеле, пăшалтан персе—42 очко, ишсе—35 очко, шыва сиксе—14 очко, веслапа ишсе тата велоçипедпа чупса—28-шер очко илмеле.

Спартакиадă пуçланаччен вăхăт икĕ уйăхран та сахалтарах йулчĕ. Çак срук хушшинче пирĕн республикăри физкуљтурă организацисен хамăрăн ордĕнлă республикăна тивĕçлĕ командă хатĕрлемеле.

Спартакиадăна хутшăнма пĕр Шупашкар хулинчи физкуљтурниксен вăйĕ кăна çителĕклĕ пулмасть. Спартакиадă пуçланаччен хамăр республикăри кашни районрах лайăх спортсменсем тупса палăртас пулать. Çак тĕлĕшпе физкуљтурăпа спорт ĕçĕсен республикăри комитечĕ ийуљ уйăхĕнче хамăр республикăра спартакиадă туса ирттерет. Ку спартакиадă та çичĕ республика спартакиадин программипех пулать. Ийуњ уйăхĕн вĕçĕнче Йетĕрне хулинче Сăр шывĕ тăрăхĕнчи районсенчи командăсен спартакиади пулать.

Çак спартакиадăсем умĕн çăмăл атљотикă, шывра ишесси, весласемпе ишесси, велоçипедпа чупасси йĕнĕпе районсенче ăмăртусем пулса иртеççĕ.

Ку таранччен Атăл тăрăхĕнчи спартакиадăра Атăл тăрăхĕнчи хуласен спортсменĕсемпе çулла тĕлпулса выљанă чухне пирĕн республикă команди йаланах чи йулашки вырăнсене йышăннă. Ку вăл, пĕрремĕшĕнчен, пирĕн физкуљтура организацисенче вĕренӳлĕ-спорт ĕçне йапăх туса пынинчен килнĕ тата, иккĕмĕшĕнчен, пирĕн спортсменсем ваљљи тренировкă тума, уйрăмах çăмăл атљотикăпа тренировкă тума, кирлĕ условисем пулманран килнĕ. Халљхи спартакиадăна хутшăнакан командăсен вăйĕсем пĕр пекрех тесе калас пулать, çавăнпа пĕрремĕш вырăна тухассишĕн кĕрешесси кашни командăшăнах тимлĕ те йăвăр пулмала.

Чăваш республикĕн команди спартакиадăри пĕрремĕш вырăншăн ăнăçлăн кĕрештĕр тесен, вĕренӳ ĕçне тата ГТО значокĕн нормисене парассине пысăккăн сарса йамала. Нацилĕ çичĕ республикăн спартакиадине хатĕрленес тĕлĕшпе Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ çакăн пек тĕп задачă лартрĕ: ГТО значокĕн нормисене партарас çулталăк заданине 80 процентран кайа мар тултармала. Кăçалхи ийуњĕн 1-мĕш тĕлне ГТО значокĕн I-мĕш сыпăк нормисене партарас çулталăк планне 44,5 процент тултарнă. Çак ийуњпе ийуљ уйăхĕсенче 1.800 çынран кайа мар нормăсем памала. ГТО йĕнĕпе халљхи вăхăтра ĕç начар пырать-ха.

Спартакиадă пуçланиччен ăмăртусем ваљљи вырăнсем тупса хатĕрлес пулать. „Темп" обшчĕствăн стадионĕ йапăх, кунта Пĕтĕм Сойузри ăмăрту ирттерме пачах май çук. Стадион çинче чупмали çулсемпе çăмăл атљотикă тумали сектăрсене халљ те йусама тытăнман, шыв станцине йĕркелесе çитермен. Шупашкар хулинчи физкуљтурниксем ваљљи вĕренӳлĕ спорт ĕçне вăйлатасси стадионсемпе шыв станцине йĕркеленинчен те нумай килет.

Нацилĕ çичĕ республикăн спартакиадине кăçал пĕрремĕш хут ирттереççĕ, вăл малашне традицилĕ ĕç пулса тăмала.

Н. Й.

ЧĂВАШСЕН ЙАЛХУÇАЛĂХ РАБФАКĔ

1938—1939 вĕренӳ çулĕнче

вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Рабфака 18 çултисенчен пуçласа 30 çултисем таран—арçынсене те хĕрарăмсене те илеççĕ.

1-мĕш курса туллимар вăтам шкул программи чухлĕ пĕлӳ илнисене, II-мĕш курса—8-мĕш клас программи чухлĕ, III-мĕш курса—9-мĕш клас программи чухлĕ пĕлӳ илнисене йышăнаççĕ.

Вĕренме кĕрекенсем çак предметсемпе испытани тытаççĕ:

I-мĕш курса кĕрекенсем—вырăс чĕлхи (çырупа тата сăмахпа), чăваш чĕлхи (çырупа тата сăмахпа), математикă (çырупа тата сăмахпа), СССР Конституцийĕ, йестествознани тата географи — туллимар вăтам шкул программи тăрăх,

II-мĕш тата III-мĕш курссене кĕрекенсем çӳлте кăтартнă предметсемсĕр пуçне тата çак предметсемпе испытани тытаççĕ: физикă, хими, вырăс литературин тата СССР историйĕ. (II-мĕш курса кĕрекенсем 8-мĕш клас программи тăрăх, III-мĕшне кĕрекенсем—9-мĕш клас программи тăрăх).

Зайавленисемпе пĕрле çак документсене йамала:

1. Вĕренни çинчен свидетелство (подлинник);
2. Сывлăх çинчен тата хул пуçтарни çинчен справкă;
3. Хăш çулта çурални çинче свидетелствă;
4. Автобиографи;
5. Икĕ фото-картăчкă—вĕренекен хăй алă пусса тата государствă учреждениче çирĕплетсе йамала.
6. Çар учотĕнче тăни çинчен справкă (военнообйазаннăйсемшĕн).

Паспăрт хăйпе пĕрле илсе пымала.

Зайавленисене августăн 15-мĕшчен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 22-мĕшĕнчен 26-мĕшне пулаççĕ. Испытанине рабфак чĕнсен çеç пымала (ун ваљљи 20 пус марка йамала).

Занйатисем сентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Вĕренме илнисене стипенди, обшчежити тата çуртса тăмалисем параççĕ.

Адрĕс: гор. Чебоксары, ул. Карлă Маркса, 22. Сельхозрабфак, директору.

ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита №311

Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтреста. Закăз № 500.